www.tavanen.ru

Таван Ен

плюс Причебоксарье

Суя меню
САМАНА ТЁКЁРЁ ■→ 2

Мăнук дачăсăр хăварчĕ
ШĂПА ■→ 4

Грипп районшăн хăрушă-и?
СЫВЛĂХ ■→ 6

Пулас олимпиецсем

№6 ● (106231-106232) ● ФЕВРАЛЁН 15-МЁШĔ ● 2018 ● КĔÇНЕРНИКУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хакĕ ирĕклĕ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать

● АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ

В. Шумилова сăн ӳкерчĕкĕ

Парăмçăсене кавир çине, инвестицие – предприятисене

Çутă сăнлă стипендиатсене вара районах илĕртмелле

Февралĕн 12-мĕшĕнче Кӳкеçри культура çуртĕнче районăн 2017 çулхи социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвне пĕтĕмлетессипе, 2018 çулхи тĕллевсене палăртассипе анлă канашлу иртрĕ. Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Николай Малов тата влаç органĕсен ытти представителĕ хутшăнчĕç.

Инвестици илĕртӳлĕхĕн майĕсем

Канашлу пуçланиччен маларах Михаил Игнатьев район пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Алевтина Исаевăпа тата райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриевпа муниципалитетăн малашнехи аталанăвĕн çулĕйĕрĕсене сӳтсе явнă. Владимир Димитриев район территорийĕнче тĕрлĕ программа ĕçленине, инвестицисене илĕртессине, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелессине пысăк тимлĕх уйăрнине пĕлтернĕ. Паянхи куна районта 50 инвестици проекчĕ пурнăçланать, кăçал 26 проекта хута ямалла, çакă çĕнĕ 304 ĕç вырăнĕ йĕркеleме май парĕ. Михаил Игнатьев пĕчĕк тата вăтам бизнеса аталантарас ĕçе тимлĕх уйăрмаллине каланă. Çакăн евĕр предприятисем районта 2017 çулта 2 процент ӳснĕ. 16,6 млн ытла тенкĕлĕх патшалăх пулăшăвĕпе пĕчĕк предпринимательствăн 12 субъекчĕ усă курнă. Ял хуçалăх ĕçченĕсене кӳрекен патшалăх пулăшăвĕ, çурт-йĕр хăпартасси, «Чăвашбройлер» ОАО ĕçченĕсене çĕнĕ ĕç вырăнĕ тупма пулăшасси – çак ыйтусем пурте влаç органĕсен представителĕсем канашлу умĕн сӳтсе явнă тĕп темăсем пулнă.

Культура çурчĕн фойинче Михаил Игнатьев ал ăстисем хатĕрленĕ курав, унтан çамрăк волонтерсен умĕнче чарăнчĕ. Республика Пуçлăхĕ умĕнче хăйсене малтанласа вăтанчăклăн тытнă ачасем Пуçлăх шанса каласнипе хăюлланса кăçал РФ Президенчĕ Владимир Путин 2018 çула волонтер çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ хыпара кăмăлтан кĕтсе илнине, ырă ĕçсем пурнăçлама яланах хатĕррине пĕлтерчĕç.

Канашлăва уçнă май, Михаил Игнатьев агропромышленноç пайĕнче ĕçлесе хисепе тивĕçнисене патшалăх наградисемпе чысларĕ. Вĕренӳре, ĕçре, пултарулăхра, спортра пысăк çитĕнӳсемпе палăрнă ентешсене хисеп, тав хучĕсемпе чысларĕç, пултарулăхри ăнтăлушăн ятарлă стипендие тивĕçнĕ çамрăксем çак кун Пуçлăх аллинчен ĕнентерӳ хутне илчĕç.

Районăн аталанма майсем пур, республика та тĕрев кӳрет. Михаил Игнатьев «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çулсем» программăпа иртнĕ çул республика çул-йĕрĕсене сарма федераци бюджетĕнчен нихăçанхинчен те нумай укçа-тенкĕ – 5,3 млрд – уйăрнине, 2018 çулта та ун виçи пĕчĕк маррине – 5 млрд тенке яхăн пулнине каларĕ.

Владимир Димитриев районăн 2017 çулхи социаллă пурнăçĕпе тата экономика аталанăвĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ. Пĕлтĕр района 1,5 млрд тенкĕлĕх инвестици илĕртнĕ, 128 çĕнĕ ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ. Инвестицисене «Тепличный комплекс «Новочебоксарский» ООО (805 млн тенкĕ), «Юрма» Агрохолдинг (286 млн), «Ольдеевская» агрофирма (250 млн), «Атлашевский» СХК ООО (14 млн) предприятисем объектсене реконструкцилеме тата хăпартма усă курнă.

Нумай ачаллă çемьесен 76% – 662 çемьене – тӳлевсĕр çĕр лаптăкĕсемпе тивĕçтернĕ, кăçал тепĕр 80 çемье хăйĕн черетне кĕтсе илĕ. Пĕлтĕр Кӳкеçри тата Аталъялти лаптăксем патне газ пăрăхĕсене çитернĕ. Нумай ачаллă çемьесем валли уйăракан çĕр лаптăкĕсене коммуникацип тивĕçтерес ĕçе ытти ял тăрăх ертӳçисене те малалла тăсма хушрĕ Владимир Павлович.

2017 çултанпа республикăра ЧР Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн Хушăвĕпе вырăнти обществăлла инфраструктурăна аталантарасси çинче никĕсленнĕ проектсене пурнăçа кĕртессипе ятарлă программа ĕçлет. Инициативлă бюджет программин лайăх енĕ – тавралăха тирпей-илем, хăтлăх кĕртес ĕçе вырăнти çынсене явăçтарни. 2017 çулта район территорийĕнче 5,8 млн тенкĕлĕх 7 проект пурнăçа кĕнĕ. 2018 çулта инициативлă бюджет программине хутшăнас тĕллевпе 13 ял тăрăхĕ проектсем тăратнă.

↪ 10

Сăн ӳкерчĕксене пăхса тĕлĕнĕр: https://vk.com/tavanen.

● РЕСПУБЛИКĂРА

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔН ĔНЕР ИРТНĔ ЧЕРЕТЛĔ ЛАРĂВĔНЧЕ IV кварталшăн пĕр çын пуçне тивекен пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçене палăртнă. Вăл 2017 çулăн III кварталĕнчипе танлаштарсан 6,2%, е 543 тенкĕ, чакнă, 8236 тенкĕпе тан. Çапла майпа вăл ĕçлеме пултаракансемшĕн 8719 тенкĕпе, пенсионерсемшĕн 6716 тенкĕпе, ачасемшĕн 8365 тенкĕпе тан.

Чăваш Енри Ĕçлев министерствинче пĕлтернĕ тăрăх, пĕлтĕрхи IV кварталшăн пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе федерацин Атăлçи округĕн пур регионĕнче те чакнă. Ку виçене Чăвашстат апат-çимĕç, пулăшу хакĕсене, тăкаксене кура кварталсерен хатĕрлекен кăтарту тăрăх йĕркелеççĕ.

РФ «ТРАНСПОРТ ТЫТĂМНЕ АТАЛАНТАРАССИ» ПАТШАЛĂХ ПРОГРАММИПЕ РФ субъекчĕсене çул-йĕрсене пăхса тăма кӳрекен пулăшу шучĕпе Чăваш Республикине 2018 çулта 450 млн тенкĕ уйăрĕç. Тивĕçлĕ Хушăва февралĕн 10-мĕшĕнче РФ Правительство Председателĕ Дмитрий Медведев алă пуснă.

Укçа-тенке кĕперсене реконструкцилеме, юсама тата çĕннисене хăпартма усă курма палăртаççĕ. Республика планĕнче – Шупашкарти Мускав кĕперĕн транспорт çӳрекен пайне 6 полоса таран сарлакалатасси, Пăрачкав салинчи кĕпер çинче тĕп юсав ĕçĕсем ирттерме хатĕрленме тытăнасси.

Аса илтерер: Мускав кĕперĕн реконструкцийĕ 2015 çулти контрактпа килĕшӳллĕн пурнăçланать. 2017 çулта федераци бюджетĕнчен республикăна 340 млн тенкĕ куçарса панă, 2018 çулта 365 млн тенкĕ пăхса хунă.

НАУКĂПА ТĔПЧЕВ ФИНАНС ИНСТИТУЧĔ Раççей субъекчĕсен 2017 çулхи бюджет кăтартăвĕсен уçăлăхĕн рейтингне пĕтĕмлетнĕ. Институт сайтĕнчи информаци тăрăх, федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен хушшинче Чăваш Республики 2016 çулхи кăтартупа танлаштарсан пĕр картлашка çӳлерех хăпарнă, 2-мĕш вырăна тивĕçнĕ. Çĕршыври 85 субъект хушшинче Чăваш Ен 7-мĕш вырăн йышăнса чи уçă бюджетлă регион-лидерсен ушкăнне кĕнĕ. 2016 çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе регион 16-мĕш вырăнта пулнăччĕ.

Тĕ сĕнет

Раççей почти урлă февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 31-мĕшĕччен çур çуллăха «Таван Ен» хаçата 385 тенкĕ те 50 пуспа, йӳнĕрех, сырăнма пулать. Васкăр юлташсем!

Сырăнтару индексĕ П6022

Кашни çыннăнах таван ен пур, район çыннисен «Таван Ен» пур

Светлана КОНДРУЧИНА, Ишлей

Михаил БАБИЧ, РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ:

– РФ Вĕрентӳпе наука министерстви кадетсен корпусĕсенче, кадетсен шкулĕсенче, мĕнле региона йĕркеленнине пăхмасăр, пĕр пек стандартсемпе условисем пулмаллине çирĕплетет. Ачасен тумĕн (формин), апатлану нормативĕсен, пурлăхпа техника базин стандартсене тивĕçтермелле. Чи пĕлтерĕшли вара – ачасене паха пĕлӳ парасси. Кадет шкулĕсенчен вĕренсе тухакан ачасем, Суворов тата Нахимов ячĕллĕ çар училищисенчи çамрăксем пекех, Аслă çар вĕрентӳ заведенийĕсене вĕренме кĕме пултарччăр. Кам хăйĕн пурнăçне çар пурнăçĕпе çыхăнтарас мар тет, çĕршывăн кирек мĕнле аслă вĕрентӳ учрежденийĕнче тивĕçлĕ пĕлӳ илме пултартăр.

ВИÇĔМКУН РФ ПРЕЗИДЕНЧĔН ФЕДЕРАЦИН АТĂЛÇИ ОКРУГĔНЧИ ПОЛНОМОЧИЛЛĔ ПРЕДСТАВИТЕЛĔ МИХАИЛ БАБИЧ ĕçлĕ çулçӳревпе Шупашкарта пулнă. Вăл Чăваш Республикин Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа пĕрле федерацин Атăлçи округĕнчи Чăваш Енри Совет Союзĕн Геройĕ А.В.Кочетов ячĕллĕ кадет корпусĕн строительство ĕçĕпе паллашнă. Шкулăн строительство ĕçĕ пирки Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин тĕплĕн каласа кăтартнă.

Графикпе килĕшӳллĕн, объекта кăçал сентябрь уйăхĕнче хута ямалла. Кадетсен шкулне харăсах 400 ача çӳреме пултарать. Михаил Бабич генподрядчике проект ĕçĕсене тимлĕх уйăрма сĕннĕ. «Кашни блокра ятарлă подрядчиксем ĕçлеççĕ. Пурин те пĕрпĕринпе килĕшсе ĕçлесе пымалла. Çирĕп тĕрĕслев пулмалла», – асăрхаттарнă вăл. Шупашкарта пурăнакансем çак ятарлă вырăна Кадетсен паркĕ тесе ят парас кăмăллă пулнине ырланă. «Кун пек ят хальлĕхе ниçта та çук пулĕ», – тенĕ сумлă хăна.

Иван Моторин проект икĕ тапхăрпа пурнăçланнине асăннă. Чăваш Республикин ертӳлĕхĕ Михаил Бабича региона çакăн пек пысăк пулăшу кӳнĕшĕн тав тунă. Кадет шкулĕ çумĕнче хоккейла вылямалли ятарлă вырăн пуласси те паллă, строительство валли федераци бюджетĕнче 2019 çулта 180 млн тенкĕ пăхса хума палăртнă. Михаил Бабич Михаил Игнатьева строительство ĕçне пысăк витĕм кӳнĕшĕн, корпусăн строительство ĕçне çирĕп тĕрĕслевре тытнăшăн тав тунă. «Пур ыйтăва та татса панă. Эсир паян пурсăр та куртăр, строительство ĕçĕсем графикпе килĕшӳллĕн пулса пыраççĕ. Подрядчиксем хăйсене шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлани куç кĕрет. 2018 çулти сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çак корпус хута каймалла. Эпир çакна шанатпăр», – тенĕ РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич. ■

● РЕСПУБЛИКĂРА

Электронлă патшалăх пулăшăвне аталантарасси – тунтикунсерен Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ведомство ертӳçисемпе иртернĕ канашлура пăхса тухнă ыйтусенчен пĕри пулнă. Республикăра электронлă правительство программине пурнăçа кĕртес темăпа Чăваш Ен информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ Александр Иванов тухса каласнă. Раççей Президенчĕн «майри указĕсемпе» килĕшӳллĕн 2018 çул вĕçне патшалăх пулăшăвĕпе электронлă майпа усă куракансен йышне 70% çитермелле . Чăваш Енре 2016 çулти пĕтĕмлетӳсемпе çак кăтарту 69%-па танлашнă – çакăн пек кăтартусем илсе кăтартать Росстат. Ку вăл – çĕршыври 3-мĕш результат.

Паянхи кун Чăваш Енре электронлă формăпа халăх пурнăçĕн тĕрлĕ сферине пырса тивекен патшалăх тата муниципалитетăн 60 пулăшăвĕпе усă курма пулать. Вĕсемпе республикăри пур район тата хула администрацийĕнче тивĕçтереççĕ. Çынсен хушшинче анлă сарăлнă патшалăх пулăшăвĕн тĕсĕсем: ЗАГС органĕсем кӳрекеннисем, ача садне черет тăрасси, тухтăр патне çырăнасси, архив справкисем илесси.

Министр ырă хыпар та пĕлтернĕ – Чăваш Ен 2018 çулта информаци технологийĕсен сферинчи регионаллă проектсене пурнăçа кĕртме федераци бюджетĕнчен субсиди тивĕçекенсен йышне кĕнĕ. ■

● РАЙОНТА

ИШЛЕЙ ЯЛ ТĂРĂХĔНЧИ МУСКАРИНКАССИНЧИ КЛУБА юсама палăртнă. Культура çуртĕнче пĕлтĕр октябрь уйăхĕнче пушар пулнă. Юсав ĕçĕсем ирттерме район бюджетĕнчен 420 пин тенкĕ уйăрĕç. Çак укçа-тенкĕпе клубра пластик чӳречесем лартма, çурт тăррине, шалти котельнăя юсама планланă. Котельнăйра пушарченех хурана улăштарнă, радиаторсем лартнă пулнă. Çакăн çинчен Ишлей ял тăрăх пуçлăхĕ Евгений Субботин пĕлтерчĕ. Пушар хыççăн вырăнти халăх клуб çуртне йĕркене кĕртнĕ, хальхи вăхăтра вăл ĕçлет. ■

Çул-йĕр çитĕнĕвĕ

● РАÇÇЕЙ ПРЕЗИДЕНЧĔН ХУШĂВНЕ ПУРНĂÇЛАСА

Çул-йĕр тытăмĕ патшалăхшăн тата граждансемшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине çирĕплетсе пама кирлехши? Мĕн ĕлĕкрен транспорт магистралĕсене контрольлесе тăрассишĕн харкашусем пынă. Паян та çулсем хăйсен стратеги пĕлтерĕшне çухатмаççĕ. Ку вăл – экономика аталанăвĕ. Ку вăл – çынсен пурнăçĕн пахалăхĕн кăтартăвĕ.

Пысăк территориллĕ Раççейшĕн, çав шутра Чăваш Еншĕн те, çак ыйту актуаллă. Совет Союзĕ саланнăранпа вуншар çул иртсен унччен те çав тери паха пулман çулсем кивелсе юрăхсăра тухрĕç. Тĕрлĕ категориллĕ çулсен пин-пин километрĕ çинче пĕр харăсах юсав ĕçĕсем ирттермелле. Çав вăхăтрах çĕннисене те сармалла вĕт!

Асăннă сферăра ӳсĕмсем темиçе çул каялла сисĕнме пуçларĕç. Раççей Президенчĕн Хушăвĕсем хыççăн çул-йĕр отраслĕнче пысăк ĕçсем пурнăçланма тытăнчĕç. 2012-2017 çулсенче Чăваш Енре 1156 км республика пĕлтерĕшлĕ çулсем çинче юсав ĕçĕсем ирттерчĕç. Ку – пысăк цифра. Мускава çитнинчен те ытларах. Анчах та ăна республикăри ялсаласен хушшине хурса тухсан çакна ăнланма пулать: ĕçлемелли тата нумай. Темле пулсан та, ӳсĕм курăнать.

Çĕнĕ çулсене 220 км сарнă. Ку вара чăннипех те аталанăвăн кăтартăвĕ. Çакна та палăртмалла: çул-йĕр строительстви – коммуналлă хуçалăхăн чи хаклă отраслĕ.

Укçа-тенкĕ енчен ларутăру лайăхрах та лайăхрах. Кăçалхи Çул-йĕр фончĕ, пĕлтĕрхи пекех, 5 млрд ытла тенкĕпе танлашать. Ку вăл иртнĕ çулсенчипе танлаштарсан темиçе хут нумайрах та. Çакăн çине федераци курăмлă пулăшăвĕ, унсăр пуçне Çул-йĕр фондне çĕнĕлле йĕркелени те витĕм кӳчĕ.

> Çул-йĕр тытăмне лайăхлатса пыни, ăна модернизацилени – пирĕн стратегиллĕ тĕп çул-йĕрсенчен пĕри.
>
> **В.В. ПУТИН, РФ Президенчĕ**

Çул-йĕр тытăмĕн аталанăвĕ тĕпрен илсен икĕ программăпа пурнăçланать. Чăваш Ен федерацин «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çулсем» приоритетлă проектне кĕчĕ. Хальхи вăхăтра ку илемлĕ ят кăна мар. Урăх никам та федераци укçи-тенкине пахалăхсăр юсав ĕçĕсемшĕн уйăрмĕ. Подрядчиксенчен пахалăх енчен çирĕп ыйтаççĕ, хăнăхманран çакна пурте чăтаймаççĕ те. Капиталлă юсав ĕçĕ ирттернĕ çулсен гаранти вăхăчĕ 5 çултан кая мар. Подрядчикшĕн çулсене тӳрех пахалăхлă сарасси, кайран çитменлĕхсенчен хăтăлма тепĕр хут тăкаклассинчен усăллăрах та. Çĕнĕ технологисем вăя кĕреççĕ. Пахалăха икĕ хут та тĕрĕслеççĕ. Пирĕн трассăсем çинче çул-йĕрпе строительствон хальхи вăхăтри техники пурри савăнтарать. Çакă строительство тата юсав ĕçĕсен вăхăтне кĕскетет, пахалăхне ӳстерет.

Лапсар-Мокши çул юсавĕ

Программа нумай пулмасть ĕçлеме пуçларĕ пулсан та результатсем курăнаççĕ. Пĕлтĕр çак программăпа кăна 29 км çул-йĕрпе урамсене юсанă. Республикăри транспорт министерствин кăтартăвĕсемпе, кăçал 1,4 млрд ытла укçа-тенкĕ уйăрмалла. 143 км çула юсама палăртнă. Тĕслĕхрен, Шупашкар районĕнче çулталăк вĕçне çулсен 70-75% нормативсене пăхăнса тăрĕ. Икĕ çул каялла кăна çак кăтарту 30% яхăн пулнă. Ку чăн-чăн çитĕнӳ!

Ялсенче çул-йĕр тытăмĕ ытларах «Ял территорийĕсен пĕр тикĕс аталанăвĕ» программăпа йĕркеленсе пырать. Кăçал 350 млн тенкĕ уйăрмалла. Чи малтан асăннă программăпа производствăллă ял хуçалăх лапамĕсем (складсем, фермăсем, хранилищĕсем), хресчен фермер хуçалăхĕсем, ялти социаллă объектсем патне çулсене илсе пырĕç.

Программăпа пăхса хунă укçа-тенкĕсĕр пуçне республика хăй те 300 млн яхăн тенкĕ уйăрать. Ялсенчи çулсене сарма тата юсама 700 млн тенке яхăн уйăрма палăртнă. Конкурса малăрах ирттернине шута илсен çулталăкăн ăшă тапхăрĕнче çул-йĕр строительстви хĕрӳ иртмелле.

Чăваш Ен влаç органĕсем уйăрнă укçа-тенке тухăçлă усă курнăран кура федераци центрĕ республикăна татах та пулăшу кӳме, унăн виçине ӳстерме хатĕр. Эппин, Раççей Президенчĕн çул-йĕр строительствипе çыхăннă хушăвĕсем пурнăçланаççĕ. ■

Ачăр садикре мĕн çинине пĕлетĕр-и?

Интернетра мĕн шыранине?

Е. Сапаркина кашни документпа тимлĕ паллашрĕ

А. Тихонова сĕт ӳкерчĕкĕ

● САМАНА ТĔКĔРĔ

Февралĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи ачасен прависемпе уполномоченнăй Елена Сапаркина ĕçлĕ çул çӳревпе Шупашкар районĕнче пулчĕ. Омбудсмен çул çитменнисемпе тата вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комисси тата опекăпа попечитель пайĕн ĕçĕпе паллашрĕ.

Елена Сапаркина халăха социаллă пулăшу паракан центрта ăнăçсăр çемьесен списокне тишкерчĕ. Центр ĕçченĕсене çемьесене тимлĕн асăрхаса тăмалли пирки каларĕ, кашнинпе уйрăм реабилитаци программипе ĕçлемеллине палăртрĕ. Çакăн хыççăн уполномоченнăй «Улăп» сывлăхпа спорт комплексĕнчи медицина кабинетне çитсе курчĕ. Комиссире учетра тăракан çул çитмен ачасене спорта явăçтарнипе кăсăкланчĕ. Çавăн пекех Елена Владимировна районти вĕрентӳ учрежденийĕсенче ачасен апатлану пахалăхне те хак пачĕ. Социаллă хăрушлăхлă ларутăрури çемьесенчен пĕрне çитсе вĕсен пурăнмалли условийĕсемпе паллашрĕ.

Райадминистрацинче Елена Сапаркина хутшăннипе иртнĕ анлă канашлăва вĕрентӳ сферинче тăрăшакансем, прокуратура, медицина, полици, халăха социаллă хӳтлĕх паракан уйрăм представителĕсем хутшăнчĕç. Елена Сапаркина социаллă хăрушлăхлă лару-тăрури çемьесене вăхăтра тупса палăртса çакна сирмеллине, çемьере ачана пусмăрланă тĕслĕхсем пулмалла марринне палăртрĕ. «Профилактика субъекчĕсем тĕпрен илсен йывăр лару-тăрури çемьесемпе калаçусем ирттерсе тата вĕсем патне пырса пурăнмалли условисене тĕрĕсленипех çырлахаççĕ. Кашни çемьепе уйрăм ĕçлемелли программа тулли пурнăçланмасть. Профилактика субъекчĕсем пĕрпĕринпе тачă çыхăнса ĕçлеменни те курăнать. Çемьесемпе мĕнле мероприятисем ирттерни те уçăмлă мар», – терĕ Елена Сапаркина.

➥4

Вырăс тракторĕсем Австрали çĕрĕсем тăрăх та çӳреççĕ

Чи çĕннине вара пуçласа Чăваш Енре кăтартрĕç

● ЭКОНОМИКА ХĂВАЧĔ»

Паянхи кун агропромышленноç комплексĕ çĕнĕ йышши хăватлă ял хуçалăх техникине усă курнипе хăвăрт аталанса пырать. Пысăк технологиллĕ техника фермерсене тата ял хуçалăх таварне туса кăларакансене çак отрасле лайăхлатма тата анлăлатма май парать.

А. Тихонова сăн ӳкерĕкĕ

Эрнекун Лапсар ял тăрăхĕнчи Çатракасси ялĕнче ял хуçалăх техникине туса кăларакан чи пысăк предприятисен дилерĕ «Агромашснаб» ООО хăйĕн территорийĕнче çĕнĕ йышши ял хуçалăх техникин куравне йĕркелерĕ. Шартлама сивве пăхмасăр республикăри ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисем, ĕçченĕсем, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн представителĕсем трактор-семпе, уй-хир ĕçĕсем тумалли, выльăх апачĕ хатĕрлемелли техникăпа, ял хуçалăх ĕçне çăмăллатакан агрегатсемпе паллашрĕç. «Тĕркери сенаж» техника комплексне, выльăх апачĕ хатĕрлемелли тата ăна валеçмелли «Хозяин» маркăллă машинăна ĕçре кăтартса мастер-класс та йĕркелерĕç кунта.

«Кирюша» К-424 çĕнĕ трактор умĕнче уйрăмах хĕвĕшрĕ халăх. Ăна Санкт-Петербургри трактор заводĕнче туса кăлараççĕ. Кăмăл пурриссем унăн кабининче ларса пăхма кăна мар, ярăнма та пултарчĕç. «Ку трактора виçĕ çул ĕçлеттерсе тĕрĕсленĕ. Иртнĕ çул вĕçĕнче ăна сутлăха кăларма пуçларăмăр. Чăваш Республикинче пуçласа кăтартатпăр. К-744-па танлаштарсан вăл чылай çаврăнăçуллăрах. Çавăнпа Чăваш Енре «Кирюша» хăйĕн вырăнне тупмаллах», – ăнлантарать Санкт-Петербургри трактор завочĕн Федерацин Атăлçи округĕнче тата федерацин тĕп округĕнче ял хуçалăх техникине сутассипе ĕçлекен управляющи Максим Ляхов.

«Кирюша» ял хуçалăх ĕçĕсенче те усă курма юрăхлине палăртать Максим Сергеевич. «К-744 трактор сарлака пулнипе çул тăрăх пыраймасть. Апла пулсан ăна пĕр уйран теприне çитерме йывăртарах. «Кирюша» вара асфальт çул тăрăх çăмăллăнах çӳрет. Трактор çинче хальхи йышши двигатель, 240 лаша вăйĕ унăн, çăмăл машина çинчи пек автомат-коробка. Икĕ режимпа ĕçлет. Уйра 4-мĕш хăвăртлăхпа ним мар çӳрет, трасса çинче сехетре 50 çухрăм таран аталантарма пултарать. Механизатор та хăйне кабинăра аван туять», – ăнлантарать управляющи техникăн уйрăм енĕсем пирки. Çакна ял хуçалăх ертӳçисем те хакларĕç. Презентаци вĕçленнĕ тĕле 5 млн тенкĕ ытларах тăракан трактор хуçи тупăнчĕ, вăл Канаш районне кайрĕ. «Кирюша» Беларуçре, Чехословакире, Канадăра кăна мар, Австралие çитсе унти уйсем тăрăх та çӳренине каласа хăвармалла.

«Агромашснаб» ООО ял хуçалăх техникине туса кăларакан предприятисен Чăваш Республикинчи дилерĕ пулнипе техникăна реализацилет, гарантипе килĕшӳллĕн юсаса парать. «Гарантие кĕртнĕ запас пайсен склачĕ пуррипе техникăри кăлтăксене 48 сехетре пĕтеретпĕр», – тет предприяти директорĕ Владимир Жирнов.

Курав хыççăн ял хуçалăх таварĕ туса кăларакансем семинара хутшăнчĕç. Унта экспертсем куравра тăратнă çĕнĕ йышши техникăсемпе тĕплĕнрех паллаштарчĕç.

АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

ШУХĂШ

Петр ТУНГУЛОВ,
Ленин ячĕллĕ СХПК-колхоз председателĕ:

– «Агромашснаб» ООО кашни çулах çакăн евĕр куравсем ирттерсе çĕнĕ йышши техникăпа паллаштарать. Пĕлтĕр Санкт-Петербургра К-700 «Кировец» трактор туса кăларакан заводра пулса куртăмăр. Унта пире рамăран пуçласа детальсем пуçтарнине кăтартрĕç. Куравра кашни ял хуçалăх техники çинчен тĕплĕн ăнлантарса панисĕр пуçне вĕсен хакĕпе тата пахалăхĕпе паллашма май пур. Тата çакăн пек тĕл пулусем пĕр-пĕрин опычĕпе паллашнипе паха, усă куракан техника ĕçре хăйне мĕнле кăтартнине те сӳтсе яватпăр.

Иртнĕ çул çакăн пек курав хыççăн утă-улăм рулонне турттаракан техника туянтăмăр. Кăçал вара икĕ ял хуçалăх техникине илме планланă. Вĕсенчен пĕри – 8-9 метр сарлакăш çĕре илсе пыракан культиватор. Унăн тĕп секцийĕн айккинчи брусĕсем çине «çунатсем» çирĕплетнĕ, вĕсем гидроцилиндрсем пулăшнипе хуçланса пуçтарăнаççĕ. Çапла вара унпа трасса тăрăх пыма чăрмавлă пулмĕ.

Аверкий ПЕТРОВ,
Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн доценчĕ:

– Куравра пире «Хозяин» фирмăн выльăх апатне вĕтетекен, валеçекен техники кăсăклантарчĕ. Сĕт сумалли аппарата та тытса пăхмасăр иртеймерĕмĕр. Техникăна ĕçре пăхсан тин суйласа илме пулать. Çакăн пек куравсене хутшăнса хамăр пĕлĕве ӳстеретпĕр, студентсене çĕнĕ йышши техника пирки каласа панă чухне те çак пĕлӳ питĕ вырăнлă.

Сергей ПЕТРОВ,
Çĕрпӳ районĕнчи «Гварди» ял хуçалăх кооперативĕн председателĕ:

– Иккассинчен вăрман урлă каçсанах курăнать манăн хуçалăх. Виççĕмĕш çул сенажа пленкăна чĕркесе хатĕрлетпĕр. Çак агрегат куравра пурччĕ. Люцернăна чечекленичченех çулатпăр та кăштах типĕтетпĕр, вара чĕркетпĕр. Çапла майпа хатĕрленĕ сенаж пахалăхĕ упранса юлать. Сĕт лайăх суса илес тесен чи малтанах выльăха тутлăхлă апатпа тăрантармалла-çке. Тата пленкăпа чĕркесе хатĕрленĕ сенаж юр айĕнче те лайăх упранать, çумăр айне лекни те хăрушă мар, çĕрмест.

Вăранма вăхăт

Хуçалăхсем вăрлăх хатĕрлеççĕ

● КАНАШЛУ

Кунсем вăрăмланса пынăçемĕн çĕр ĕçченĕсен çур аки ĕçĕсене ирттересси пирки шухăшлама тивет. Вăрлăх хатĕрлессин шайĕ, выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕ, ял хуçалăх предприятийĕсен шăпи – çак ыйтусене сӳтсе явма пухăнчĕç иртнĕ эрнере райадминистрацин акт залĕнче АПК ĕçченĕсем. Ăна райадминистрацин ял хуçалăх тата экологи пайĕн пуçлăхĕ Сергей Ванюшкин ертсе пычĕ.

Чăх-чĕп фабрики хăйĕн ĕçне малалла тăсĕ-и?

Канашлу йĕркинчи пĕрремĕш ыйтупа – выльăх-чĕрлĕхе аталантарас отраслĕн 2017 çулхи пĕтĕмлетĕвĕсемпе – Сергей Алексеевич хăй паллаштарчĕ. 2017 çулта пур хуçалăхра та чĕрĕ виçепе аш-какай туса илесси 9% ӳснĕ, 67,7 пин тоннăпа танлашнă. Пысăкрах пайĕ – 66 пин тонна – ял хуçалăх предприятийĕсене тивет. Çулталăкра туса илнĕ аш-какайран 93% – чăх-чĕп какайĕ. Анчах та 2018 çулта çак кăтарту чакма пултарать. Юлашки çулсенче «Чувашский бройлер» ОАО пĕтĕм хăватпа ĕçлеймерĕ, паянхи кун унта чăх-чĕп пурăнакан пĕр вите кăна. Çак кунсенче юлашки чăх-чĕпе пусса аш-какая ăсатма палăртнă. 2018 çулта хуçалăх хăйĕн ĕçне малалла тăсĕ-ши – иккĕленӳллĕ. Унсăр пуçне асăннă хуçалăхпа çĕрсене тара илессипе çыхăннă килĕшӳве те пăрахăçлама пултараççĕ – пĕлтерчĕ Сергей Ванюшкин.

Сысна какайне туса илесси иртнĕ шайрипе тан, уйрăмах пысăк кăтартусем «Сувар-2» ТП ОООра тата «Прогресс» ЗАОра. Мăйракаллă шултра выльăх шучĕ январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пур хуçалăхра та 13358 пуç шутланнă, пĕлтĕрхи асăннă тапхăртипе танлаштарсан кăшт ӳснĕ. Сĕтлĕ ĕнесен йышĕ – 6592 пуç. Çавăн пекех хуçалăхсенче 3 млн та 138 пин чăх-чĕпе тата 19 пин те 638 пуç сыснана шута илнĕ.

Ăратлă выльăх туяннă

Ял хуçалăх предприятийĕсем ĕнесен йышне пысăклатса пыраççĕ: «Чурачикское» ОАОра – 58, «Атлашевская» агрофирмăра – 11, «ЧебоМилкра» харăсах 103 пуç хушăннă. «Ольдеевская» агрофирма, «Чурачикское» ОАО, «Приволжское» АО, Ленин ячĕллĕ СХПК-колхоз 2017 çулта 19 млн тенкĕлĕх 120 пуç ăратлă выльăх туяннă. Çав вăхăтрах Куйбышев ячĕллĕ СХПК-колхозра тата С.Д. Чернуха фермер хуçалăхĕнче сĕтлĕ ĕнесене пĕтерсе вăкăрсем ĕрчетме тытăннă.

Сĕт суса илесси 2016 çултипе танлаштарсан 5% ӳснĕ, пур хуçалăхра та çак кăтарту 39,5 пин тоннăпа танлашать. Çулран-çул ял хуçалăх предприятийĕсенче нумайрах та нумайрах сĕт суса илеççĕ. Çак енĕпе «Атлашевский» СХК, «Ольдеевская» агрофирма ЗАО, «Чурачикское» ОАО, Ленин ячĕллĕ СХПК-колхоз, «Приволжское» АО тата «ЧебоМилк» ООО ăнăçлă ĕçлеççĕ. Маларах асăннă 2 хуçалăхра çулталăкра пĕр ĕнерен 8 пин ытла кг, «Чурачикское» ОАОра тата «ЧебоМилк» ОООра 7 пин ытла кг сĕт сăваççĕ. Хуçалăхсенчи сĕт хакĕ хушма хуçалăхсенчипе танлаштарсан темиçе тенкĕ пысăкрах. Район территорийĕнче халăхран 6 индивидуаллă предприниматель сĕт пуçтараççĕ. Пĕтĕмĕшле – 3 т. Ку – нумаях мар пулин те, хăш-пĕр хушма хуçалăхра сĕт сутса укçа тăвасси çемьери пĕртен-пĕр тупăш илмелли меслет пулса тăрать. Сĕт хакĕ йӳнелсе пынине, çак ыйтăва влаç органĕсем те сӳтсе явнине палăртрĕ Сергей Ванюшкин. Халăхран пухакан сĕт хакĕ йӳнелни Атăлçи тăрăхĕнчи пур регионшăн та кăтартуллă.

Сергей Алексеевич ял хуçалăх предприятийĕсене патшалăх пулăшăвĕпе çыхăннă документсене йĕркелес ĕçре тимлĕрех пулма сĕнчĕ. Хальлĕхе районта çак енпе ĕçлекен специалист çуккипе субсидиллĕ пулас текенсен документсем хатĕрлессипе хăйсен ытларах ĕçлемелле пулать.

Паха вăрлăх – тухăçлăх никĕсĕ

Районти предприятисенче вăрлăх хатĕрлес ĕç епле пыни çинчен Россельхозцентрăн районти уйрăмĕн ертӳçи Людмила Добролюбова каласа пачĕ. Иртнĕ эрнере районта кондициллĕ вăрлăхăн тӳпи республикăри кăтартупа тан пынăччĕ – 51%. Анчах та хуçалăхсен ĕçĕпе районти тĕп специалист кăмăлсăр. «2017 çулта тыр-пула йывăррăн пуçтарса кĕнине пурте ас тăваççĕ. Нумайăшĕ ăна уйран илсе кĕнĕ те тасатмасăрах упрама хунă. Сентябрьтенпе тытса та пăхман. Тĕрĕслев çакна кăтартса пачĕ – 50 кг тырăн 4-5% çӳп-çап. Кун пек чухне мĕнле пахалăхлă вăрлăх пирки калама пулать?» – хăтăрчĕ вăл хуçалăх ертӳçисене. Çапах та вăрлăх хатĕрлес енĕпе тĕслĕхлĕ хуçалăхсем те пур. Тĕрĕслев «Приволжское» АО вăрлăхĕн шăтаслăхĕ 100% танлашнине кăтартса панă. «Ольдеевская» агрофирмăн, «Прогресс» ЗАО-Он та кăтартăвĕсем аван. Хăшпĕр хуçалăхра вара вăрлăхăн шăтаслăхĕ 50%-па кăна танлашать. Кадыков ячĕллĕ СХПК-колхоз, «Туруновский СХПК», С.Д.Чернуха ХФХ вăрлăха пĕр хутчен те тĕрĕслев витĕр кăларман. «Прогресс» ЗАО, «Чурачикское» ОАО, «Приволжское» АО, «Атлашевский СХК» ООО вăрлăха иккĕмĕш хут тĕрĕслеттереççĕ. «Ыттисен хăвăртрах вăранмалла!» – хуçалăх ертӳçисене вăрлăх хатĕрлес ĕçе вăхăтра пурнăçламаллине, районта кондициллĕ вăрлăх шайĕ ытти çултинчен кая мар пуласса шаннине пĕлтерчĕ Людмила Добролюбова.

ДЕОМИД ВАСИЛЬЕВ

ЦИФРĂСЕН ЧĔЛХИПЕ

Шупашкар районĕнчи усă курман çĕрсене муниципалитет харпăрлăхне куçарса пĕтернĕпе пĕрех. Иртнĕ çул 3677 га лаптăк çинче 1469 çĕр пайне шута илнĕ. Вĕсенчен 82%-не, урăхла каласан 3021 га çĕре, кадастр учетне тăратнă. Муниципалитет харпăрлăхне кĕртнĕ çĕр пайĕсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕнчен 66%-пе (2431 га) усă курма пуçланă.

Ачăр садикре мĕн çинине пĕлетĕр-и?

2

Вĕрентӳ учрежденийĕсенче 10 кунлăха хатĕрленĕ меню ачасене пĕçерсе çитернĕ апатран уйрăлса тăнине те палăртрĕ уполномоченнăй. «Урăхла каласан алă айĕнче мĕнле апатçимĕç пур – çавăнтан çимелли хатĕрлеççĕ», – пысăк çитменлĕх çине тĕллесе кăтартрĕ вăл. Холодильникре шăнтмалли таварсен маркировкисем çуккине кăтартса панă тĕрĕслев. Уполномоченнăй социаллă хăрушлăхлă лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ çемьесенче инвалид ача пулсан уйрăм реабилитаци программине мĕнле пурнăçланине сăнаса тăмаллине палăртрĕ. «Ачана ăна пăхнăшăн паракан укçашăн усранă тĕслĕхсем пачах пулмалла мар», – терĕ вăл. Кăкăр ачисем ӳсекен ăнăççăр çемьесене уйрăмах тимлемелле. Иртнĕ çул ӳсĕр ашшĕамăшĕн асăрханусăрлăхĕпе 10 ача сарăмсăр вилнĕ пулсан, кăçал январь уйăхĕнче кăна – 5 ача. Синкерсене асăрхаттарма социаллă ĕçченсен фельдшерсемпе тачă çыхăнса ĕçлемелле.

Шупашкар район прокурорĕн пулăшуçи Ирина Ильина çул çитменнисем йĕркене пăсассине асăрхаттарас тесен профилактика субъекчĕсен ача йĕркене мĕнле сăлтава пула пăснине, çакна тума мĕн хистенине тишкермеллине палăртрĕ. «Вĕрентӳ учрежденийĕсенче санитари-пе эпидемиологи законодательствине пăсни тĕл пулать. Çав шутра апатланăва йĕркеленĕ чухне те. Çул çитменнисенчен прокуратурăра йышăннă тавăçсенчен 25-шĕ тăлăх тата ашшĕамăш хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачасене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерес йывăрлăхсемпе çыхăннă. Ачасен социаллă прависене те пăсаççĕ. Паянхи куна районта инвалидсене чăрмавсăр кĕрсе тухма пандуссем вырнаçтарман вĕрентӳ учрежденийĕсем те пур», – терĕ вăл.

РФ ШĔМĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕн çумĕ Андрей Рябов çул çитменнисем тĕлĕшĕпе тунă преступленисен шучĕ ӳснине палăртрĕ. РФ УК 157-мĕш статйипе (çул çитмен ачисене е ĕçлеме пултарайман ашшĕ-амăшне пăхса усрамашкăн укçа-тенкĕ тӳлеменни) пуçарнă ĕççем нумайланнă. Çав вăхăтрах РФ УК 116-мĕш статйипе (хĕнени) пуçарнă ĕççен шучĕ чакнă. Çул çитменнисене арлăх тĕлĕшĕпе тĕкĕнме юраманнине хирĕç тунă преступленисем иртнĕ çулта 2 пулнă пулсан, кăçал 6. Çак тĕслĕхĕнчен 5-шĕ алкоголь витĕмĕпе пулнă. Пĕр преступление çул çитмен çамрăк тăван мар ашшĕнчен шар курнă.

Çул çитменнисем тунă преступленисен 90% çын пурлăхне вăрланипе çыхăннă. Тĕпрен илсен вĕсем дача участокĕсенче пулса иртнĕ. Иртнĕ çулхи çак тапхăрта пулнă тăватă преступленирен пĕри наркотиксене сарнипе çыхăннă. Районăн çурçĕр енчи ял тăрăхĕнче пурăнакан пĕр арçын ача район территорийĕнче кăна мар, Шупашкарта та «закладкăсем» тунă. Çул çитмен психотроплă хатĕрсене тутаннине вăхăтра тата тӳрех сисейменни, курманни профилактикăн пур субъекчĕн айăпĕпе пулса тухнине палăртрĕ Андрей Рябов. 17 çулти каччă тĕлĕшĕпе РФ УК 228 статйин 4-мĕш пункчĕпе ĕç пуçарнă.

Елена Сапаркина Пермь крайĕнче тата Бурятире пулса иртнĕ синкерлĕ пулăмсене аса илчĕ. Социаллă сетьсенче ачасене психологи витĕмĕпе усă курса хăйсем çине алă хума тата çын тĕлĕшĕпе преступлени тума хистекен ушкăнсен капкăнне лекесрен кашни ачанах асăрхаса тăмаллине палăртрĕ вăл.

АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

• СĂВĂ СĔВЕМĔ

Телей курас тĕллевĕн пур хисепĕ,
Ăна пĕлетпĕр темшĕн ăнсăртран...
Пур туйăмпа ăнлантăм, эп – сисетĕп,
Пĕрле пăрнар-и халĕ ăнсăртран?
Санра шырарăм çавăн чух ĕшенчĕк,
Салху сăнра çӳретчĕ куляну.
Каланинчен – ман чунăм та кĕлленчĕ,
Шыв сиккипе пуçланчĕ шуйлану!
Салху сан сасăра ун чух çӳрерĕ,
Çурхи хĕвел те пулчĕ пуль хура.
Мĕнле кĕсле кантри унта чĕтрерĕ?
Хăш юррине юрларĕ-ши чура?
Пĕр иртнине калла эс тавăраймăн.
Çĕнсе илеймĕн юхнă куççуле...
Çĕр чăмарне кутăн çавăраймăн,
Эс тавăраймăн иртнĕ çулсене!
Ак ӳкрĕ çăлтăр, çур çĕр варринче:
Кама кĕтетпĕр шăпа умĕнче?
Илемлĕх тĕнчине сана чĕнетĕп,
Çĕнетĕп сӳннĕ самантри чунна!
Эпир вилсессĕн, тепĕр ĕмĕр килмĕ.

Çыпăçтараймăн катăлнă чула!
Туту çинче аннӳн кулли вылярĕ.
Ăна эс ан çухат!
Мулра тупаймăн савăк ăраскал.
Кал-кал пулаймăн тăшмана хирсе.
Этем тĕнчийĕ темшĕн çакнашкал:
Пĕри савнать, тепри – çӳрет йĕрсе.
Ак, ӳкрĕ çăлтăр, «Пĕтрĕ çутă чун?!»
Йĕрĕ йăлтăр-йăлтăр, иртрĕ тепĕр кун.
Илемлĕхри телейĕн пĕр саманчĕ
Мана тивертрĕ пулĕ ăнсăртран?
Хăюлăх туртăмĕ кăштах аманчĕ.
Пур айăпĕ, сисетĕп, ку – санран!
Çитмен çĕре çитер ытар пулса
Кулса чипер ачашлăх уйĕнче,
Тĕнче пĕрре – ĕмĕрĕпе утса
Сиксе ташлар ик çамрăк туйĕнче!
Ăнланĕ кам хĕр арăм чĕрине?
Çак кăсăка кам уççăн уçса парĕ?
Шăпа сана пĕр ĕмĕр пӳрнине
Кам савăнса ăна-ши улăштарĕ?

Ак, ӳкрĕ çăлтăр, ялкăшрĕ тĕнче...
Ман ятăм юлтăр – сан кĕпӳ çинче!
... Ачалăхри йăмралăх хунав мар тек,
Аса илетпĕр иртнĕ кунсене...
Тăрать хăвалăх тайăнса аннӳ пек,
Кĕтсе ялан тăван ачисене.
Эс çак шая халь ху та çитрĕн ĕнтĕ,
Анчах, аннӳшĕн юлăн эс ачах.
Эс хăрамарăн, пăтăрмаха çĕнтĕн,
Тивертрĕн маншăн çĕнĕрен вучах!
Иăлл! çиçрĕ çиçĕм! Кусрĕ аслати.
Ăçта-ши çиçĕм? Эсĕ туйрăн-и?
Вăхăт çитсессĕн пулăн асанне,
Сӳтсе явăн шăпа мĕн сырнине.
Чăнах-ши пулчĕ эсĕ пур самант?!
Е тĕлĕкре курăнтăн-ши мана?
Тархасшăн, чунăма пит ан амант!
Чăтма пултарăн эсĕ çеç çакна.
Ак, ӳкрĕ çăлтăр, ялкăшрĕ чĕре...
Телейлĕх пултăр, хаклă вăл пире!

ЛАВРЕНТИЙ ДАНИЛОВ, сăхăтпуç

Пĕтĕм пурнăçĕ – халăх ырлăхĕшĕн

И.П. Прокопьевăн çутă сăнарĕ – халăх асĕнче

• ХИСЕПЕ ТИВĔÇЛĔ

Республика аталанăвне пысăк тӳпе хывнă, ăна 14 çул ертсе пынă, КПСС Чăваш парти обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулнă Илья Прокопьев çĕре кĕнĕренпе февралĕн 20-мĕшĕнче çулталăк çитет.

Вăл ертӳçĕ пулнă çулсенче республикăра экономикăпа промышленноç лайăх аталанса вăй илнĕ, пĕлтерĕшлĕ строительство ĕçĕсем пурнăçланнă.

Илья Павлович 1926 çулта июлĕн 29-мĕшĕнче Вăрнар районĕнче Мачамăш ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Калининăри шкула пĕтернĕ хыççăн вăл унти педагогика училищинче пĕлӳ илнĕ. 1943 çулта ăна Хăмăшри 8 çул вĕренмелли шкула историпе географи предмечĕсене вĕрентме янă, çав çулах Хĕрлĕ çар ретне илнĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн вăл Япони хирĕç пынă вăрçа хутшăннă, 1950 çулчченех хĕсметре тăнă. Çав вăхăтра куçăмсăр майпа Хабаровскри педагогика институтне пĕтернĕ. Çартан таврăнсан вăл республикăн обществăпа политика пурнăçне хастар хутшăнма тытăннă.

1963-1974 çулсенче Илья Прокопьев КПСС Чăваш обкомĕн секретарĕ пулнă. 1974-1988 çулсенче вăл пĕрремĕш секретарьте вăй хунă чух Шупашкарта трактор завочĕ хута кайса продукци кăларма тытăнать, ГЭС строительствине вĕçлеççĕ, Чăваш патшалăх университечĕн çĕнĕ çурчĕ, Операпа балет театрĕ, хулан тĕп стадионĕ, Трактор тăвакансен завочĕн культура керменĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса лартнă палăк тата ытти объект тăваççĕ. Унччен маларах укçа ĕçлесе илме инçете çӳренĕ чăваш халăхĕ савăнсах тăван тăрăха таврăнать. Унăн пурнăç шайĕ ӳсет. Çав çулсенчех Çĕнĕ Шупашкар ӳссе ларать, Шупашкарта аталаннă инфратытăмлă микрорайонсем çĕкленеççĕ. Хими комбинатĕнче, Электроаппарат заводĕнче, Пиравăр комбинатĕнче, Электровиçев приборĕсен заводĕнче çĕнĕ хăватсене ĕçе кĕртеççĕ, çăмăл тата апат-çимĕç промышленноçĕн предприятийĕсем хута каяççĕ. Шупашкар хули Атăлçи тăрăхĕнчи пысăк индустри, ăслăлăх тата культура центрĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Тăнăç пурнăçри тата çарти тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Илья Павловича «Хисеп Палли», Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, Ленин ячĕллĕ, Тăван çĕршыв вăрçин I степень орденĕсемпе, «Паттăрлăхшăн», «Япони çĕнтернĕшĕн» медальсемпе, Чăваш Республикин Хисеп грамотипе, «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орден медалĕпе, «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орденпа наградăланă. Илья Прокопьев – Шупашкар хулин Хисеплĕ гражданинĕ.

Ертӳçĕ пуласси – пысăк яваплăх. Хăйĕн ĕçне чун-чĕрепе парăнса пурнăçланă, республикăна аталантарассишĕн, çынсен пурнăçне лайăхлатассишĕн нумай тăрăшнă Илья Павлович. Республика историйĕнче унăн ячĕ ылтăн сас паллисемпе сырăнса юлнă. Хăюллă йышăнусем тума шикленменнишĕн, ĕçе чун-чĕререн парăнса пурнăçланишĕн, хăйĕнчен те, ыттисенчен те çирĕп ыйтнишĕн – акă мĕншĕн хисепленĕ ăна юлташĕсемпе ĕçтешĕсем. Вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне тăван çĕршыва тата тăван халăха халаллană. Унăн çутă сăнарĕ пирĕн чĕресенче яланах упранĕ.

ДЕОМИД ВАСИЛЬЕВ

«Мăшăр хваттере кĕртмерĕ»

• ШĂПА

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте)

Практика конкурсĕнче спорт мастерĕсемпе, Раççейĕн пĕрлештернĕ командин спортсменĕсемпе пĕрле старта тăрать вăл, лайăх кăтартусемпе палăрать. 177 кандидатран 25-шне кăна вĕренме илеççĕ, спортри кăтартусене кăна мар, унччен тренерта ĕçленине те пăхаççĕ. Петр Николаевичăн çулла тата хĕлле йĕлтĕрпе ярăнассипе тренировкăсене çӳремеллине шута илсе ăна полк музыканчĕсен ретне илеççĕ. «Упана та ташлама вĕрентме пулать», – тет оркестр ертӳçи ăна парашпан тыттарса. Ăмăртусенче каччăн пĕрре кăна мар дивизи тата чаç чысне хӳтĕлеме, тĕрлĕ хуласене çитме тивет. 5-30 км – акă уншăн ăнăçлă дистанци. Вĕсене парăнтарас тесе тренировкăсенче 50-шар км хыça хăварма тивнĕ унăн. «Спорт мастерĕ Мущин чирлесе ӳкнĕ, санăн ун вырăнне старта тухма лекет. 50 км чупмалла пулать. Ан чарăн кăна, чарăнтăн пулсан – малалла каяймастăн», – 25 çула çитсе пыракан çамрăка çакăн пек приказ параççĕ пĕр ăмăртура. Халиччен кун пек вăрăм дистанцие парăнтарман çамрăк малтанах шикленсе ӳкет. Старта тухать хайхи, пĕри иртсе каять унран, тепри, «иккĕмĕш сывлăш» килмест те килмест. 40 çухрăм хыça юлсан кăна вăй-хăват çĕнĕрен килнине туйса илет, хăвăрттарах та хăвăрттарах малалла талпăнать. «Юлашкинчен ура вăййĕсем пĕтсе çитрĕç – финиша ларса ярăнса çитрĕм», – иртнине куç умне кăларать «ĕнерхи» çар çынни. Çавăн хыççăн пысăк ăмăртусене хутшăнма пăрахать вăл, хăйĕн умне тĕллев лартать – вĕренмелле, пĕлӳ илмелле. 30 çул тĕлне кăна вăл вăтам пĕлӳллĕ пулса тăрать, аслă сержант званине тивĕçет. 12 çул службăра тăнă хыççăн Петр Николаевич Чечен республикине Киров ячĕллĕ çар училищине вĕренме яраççĕ. 9 уйăх унта вĕреннĕ хыççăн ăна взвод командирĕ пулма шанаççĕ. Чĕрĕк ĕмĕр вăл службăра ирттернĕ, офицер званине тивĕçнĕ.

Çемье телейĕ мĕнре?

Петр Николаевич службăра тăнă вăхăтра çемье çавăрнă. Икĕ хĕрпе ывăл парнеленĕ ăна мăшăрĕ. Тăван тăрăхне 3 кунлăх килнĕскер тăванĕсемпе курса калаçма та ĕлкĕреймест, усал хыпар пĕлтерсе каялла чĕнсе илеççĕ. Юратнă ывăлĕ менингококк чирĕпе вилсе кайнă. Паян икĕ хĕрĕ те çемьеллĕ унăн, мăнуксем ӳсеççĕ. Аслă мăнукĕ те хăйĕн пурнăçне çар енĕпе çыхăнтарнă. 25 çул службăра тăнă хыççăн Петр Николаевич пенсие тухса çемйипе Шупашкара пурăнма куçса килет. Унччен тĕпленме кĕтес шыраса тĕрлĕ çĕре çитет вăл – Крымра, Беларуç, ытти вырăнта пулса курать, анчах Чăваш Ĕнрен илемлĕреххине тупаймасть.

Петр Николаевич çар службби хыççăн ĕçлеме пăрахманха. Яранкассинче çĕр лаптăкĕ туянса хăтлă дача туса лартнă, йывăççене сыпса сад ĕрчетме тытăннă. Ял пурнăçне килĕштернипе унта нумай вăхăт ирттернĕ. Анчах та мăнукне пулăшас тĕллевпе кăмăла кайнă дачине те сутса яма тивнĕ унăн. Мăнукĕн, çар академине пĕтернĕскерĕн, килĕшӳ тăрăх пĕр вырăнта службăра 5 çул тăмалла пулнă. Анчах çамрăк килĕшӳ условийĕсене пăхăнман, çавна май çур миллион тенкĕлĕх тăкаксене саплаштарма тивнĕ. Шăпах – Петр Николаевичăн дачин хакĕпе. Пĕр такăнсан каçчен тенĕ пек, çур ĕмĕр ытла килĕштерсе пурăннă мăшăр хушшинче укçа-тенке пула хирĕçӳ сиксе тухать. Шупашкарти хваттерне хĕрĕ çине çыртарсан вара çывăх çыннисем ăна килне те кĕртмеççĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн Петр Николаевич мăшăрĕпе хĕрĕ элитлă районта тепĕр хваттер тата çăмăл машина туяннине пĕлет. Ăна вара, пурнăç тăршшĕпе çывăх çыннисен ырлăхĕшĕн ырми-канми вăй хунăскере палламаççĕ тейĕн. Самарта пурăнакан аслă хĕрĕ патĕнче те пурăнса пăхнă вăл, унта та хăйне хăтлă туяйман. 2 çула яхăн Шупашкарта хваттер тара илсе пурăннă хыççăн вăл ваттисен çуртне килсе лекнĕ. «Хам ухмаххипе килсе лекрĕм кунта», – сăмахĕсенче тарăхни те, хурланни те курăнать.

«Хама усал тесе шухăшламастăп, çирĕп кăмăллă – кунпа килĕшетĕп», – тет вăл. Хаяррипе алхасман, çăвара пирус чиксе курман арçын кĕлетке-çурăмран çирĕп. Кашни кунах ирхи 5 сехетре тăрса гимнастика тăвать вăл. Иртнĕ телейлĕ вăхăтсене паян Петр Николаевич фотоальбомсене пăхса аса илет. Тăван çĕршыв чысне сыхлас ĕçре чĕрĕк ĕмĕр ирттернĕскер, çемье телейĕ укçа-тенке пула арканнине ăнланаймасть. Яланах çемьешĕн, ачисемпе мăнукĕсемшĕн тăрăшнă-çке!? Çапах та пуçа усмасть Петр Николаевич, малалла пурăнас ĕмĕчĕ те унăн çав тери пысăк.

АННА ФИЛИППОВА

● В МАСШТАБАХ СТРАНЫ

Прыгунья с шестом Анжелика Сидорова выиграла первый международный старт в 2018 году. Она представляла в национальной сборной Москву и Чувашию и стала победительницей международных соревнований во французском Обоне.

Она установила рекорд соревнований, прыгнув на 4,72 метра.

Напомним, в конце января Международная ассоциация легкоатлетических федераций дала разрешение российской спортсменке на выступления на международной арене в нейтральном статусе.

В марте спортсменка планирует выступить на чемпионате мира в помещении в Бирмингеме (Великобритания). Для этого в ее активе уже есть выполненный норматив. ■

● ДЕЛА МЕСТНЫЕ

На территории Чебоксарского района действует подпрограмма «Обеспечение жильем молодых семей» федеральной целевой программы «Жилище».

За последние два года мерами поддержки в рамках подпрограммы воспользовались 36 молодых семей на сумму более 25,5 млн рублей. Среди них и семья Ивановых.

Алексей и Ольга Ивановы на учет в качестве нуждающихся в улучшении жилищных условий встали в мае 2011 года, а в конце июля были включены в список участников программы. В октябре 2015 года у них родился третий ребенок, что дало им первоочередное право на получение социальных выплат на приобретение жилья. «В июле 2017 года мы купили квартиру в поселке Кугеси, сделали ремонт, в декабре заехали», – поделились Ивановы.

Отметим, что для молодых семей при покупке жилья проблемой является отсутствие первоначального взноса, необходимого для получения ипотечного кредита. Предоставление права на получение социальной выплаты на приобретение жилья снимает ее полностью. ■

Как обеспечить безопасность детей в сети Интернет? Об этом говорили 9 февраля в Большекатрасьской сельской библиотеке, там с учащимися школы провели информационный час «Мы и всемирная паутина».

Они узнали, что Интернет может быть не только полезным, но и опасным. Главным правилом, которое ребенок обязан усвоить, является запрет на раскрытие личных данных в социальных сетях. Дети должны понимать, что писать свой домашний адрес, материальное положение семьи нельзя, так как данные доступны всем, и ими могут воспользоваться злоумышленники. ■

На День Святого Валентина принято дарить дорогим сердцу людям открытки – «валентинки». В связи с этим библиотекарь Галина Иванова провела в читальном зале Кшаушской библиотеки мастер-класс по созданию «валентинок».

Сначала она рассказала ребятам о происхождении праздника Дня влюбленных, ознакомила с литературой, а затем научила, как аккуратно и быстро можно вырезать открытки и ярко их оформить. ■

• ТВОЙ УЧАСТКОВЫЙ

Константин Юрьевич КОСТИН

УУП № 10

Участковый уполномоченный полиции Кшаушского, Ишакского сельских поселений

Кшаушское сельское поселение: д. Большие Котяки, д. Курмыши, д. Кшауши, д. Малые Котяки, д. Мемеши, д. Мижеры, д. Собаккасы, д. Тимер-Сирма, с. Янгильдино, д. Ярускасы.

д. Кшауши, ул. 9-й Пятилетки, д. 11; тел. (883540) 2-61-32.

Ишакское сельское поселение: д. Анаткас-Марги, с. Ишаки, д.Кибеккасы, д. Кивсерт-Марги, д. Малдыкасы, д. Сятра-Марги, д. Хора-Сирма, д. Чиганары, д. Ырашпулых.

с. Ишаки, ул. Ясельная, д. 6., тел. (883540) 2-61-34.

Новости с пригородным акцентом

Причебоксарье

Встречаем с гордостью гостей

● СОСТОЯЛОСЬ В РАЙОНЕ

Быть работником культуры – это значит быть в центре самых интересных, увлекательных мероприятий и ярких событий. Идти в ногу с активной и творческой молодежью, набираться мудрости и опыта от людей старшего поколения, зажигать талантливых звездочек и быть яркими перед взыскательным зрителем.

Фото Е. Дадоковой

Министр К. Яковлев ознакомился с творческой выставкой

Если раньше отрасль - культуры была брошена на выживание, то сегодня ее значимость поднимается изо дня в день. 13 февраля под руководством министра культуры, по делам национальностей и архивного дела Чувашии Константина Яковлева эта тема обсуждалась на совещании с работниками учреждений культуры Чебоксарского района, посвященных итогам за 2017 год и задачам на 2018 год. По его словам, из года в год увеличивается сумма, выделяемая на сферу культуры из бюджета республики. Если в 2016 году она составляла 1,4 млрд рублей, то в 2017-м – около 2 млрд, а в 2018-м будет выделено 2,3 млрд рублей. В связи с ростом финансирования, а вследствие и с повышением заработной платы, требования к работе культурных учреждений будут повышаться. Министр акцентировал внимание и на повышении уровня профессиональной квалификации работников, ведь на данный момент только 47,5 % сотрудников культурных учреждений района имеют профильное образование.

Начальник отдела культуры, туризма и социального развития администрации района Екатерина Кириллова ознакомила присутствующих с результатами работы культурных учреждений за истекший год. По ее словам, проведено более 3 тысяч мероприятий с участием более 33 тысяч человек. В 2017 году в рамках реализации партийного проекта «Местный дом культуры» отремонтированы Хурынлыхское, Липовское, Ойкасинское культурные учреждения на сумму 851 тысяча рублей. На укрепление материально-технической базы Пархикасинского Дома культуры направлено около 500 тысяч рублей. В этом году планируется отремонтировать Мускаринкасинский клуб на 420 тысяч рублей.

Среднемесячная заработная плата работников возросла на 36% и составила 17986 рублей. В 2018 году планируется увеличить еще на 20,8%.

447 клубных формирований, из которых 180 детских, посещают 5 тысяч человек. В домах культуры занимаются творчеством 274 коллектива, 14 из них имеют звание «народный».

И.о. главы администрации района Владимир Димитриев подчеркнул, что в 172 населенных пунктах функционируют 63 клубных учреждения, в остальных же, из-за отсутствия места, довольно проблематично собирать население для какой-либо встречи. В связи с этим он рекомендовал участвовать в различных программах, в том числе и в программе инициативного бюджетирования, работать в тесной связи с главами сельских поселений.

Константин Геннадиевич подчеркнул, что в Чебоксарском районе имеются большие возможности по привлечению туристов в регион, среди них он отметил Музей «Бичурин и современность».

Чăваш каччине нимĕç хĕрĕ патне вăрттăн çӳренĕшĕн гауптвахтăна хупнине те ас тăвать Николай Федорович. Нимĕç салтакĕсем патне туслăх каçĕсене çӳрени те, вĕсене нимĕç хуçалăхĕнче çĕр улми кăларма пулăшни те, Дрезден галерейинчи культура программисем те – йăлтах асра. Германири Заксенхаузен лагерĕнче тискерлĕхе курса фашизмран «прививка» илнĕ совет салтакĕсенчен пĕри пулнă вăл. Паян кун та вăл çарта паллашса туслашнă тепĕр чăваш ачипе, районта адвокатра тимлекен Анатолий Ивановпа тачă çыхăну тытать. Икĕ юлташăн аса илсе ахăлтатмалли те, хурланмалли те чылаях.

Чикĕ леш енче çар тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн Николай Анисимова «Гварди», «Çар салтакĕ-спортсмен», «Совет çарĕн отличникĕ» тата ытти паллăпа наградăланă.

АННА ФИЛИППОВА

Çулсемпе дамбăсемшĕн

● РАЙОНТА

Н. Смирнов сăн ӳкерчĕкĕ

Шупашкар районĕнчи кашни ял тăрăхĕнчех 2017 çулти ĕçсене пĕтĕмлетмелли тапхăр пуçланчĕ.

Февралĕн 9-мĕшĕнче Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕнчи пĕрремĕш пуху Атăлъялти культура çуртĕнче иртрĕ. ЧР Патшалăх Канашĕн социаллă политикăпа наци ыйтăвĕсен комитечĕн ертӳçи Вячеслав Рафинов, райадминистрацин хула тăвас ĕç тата архитектура пайĕн пуçлăхĕ Александр Кудряшовпа ял тăрăх пуçлăхĕ Олег Ерманов атăлъялсемпе тата хорнсорсемпе тĕл пулчĕç.

Ял тăрăхĕн иртнĕ çулхи бюджечĕ 13 млн ытларах тенкĕпе танлашнă (7 млн тенкĕ ытларах – выränти тупăш). Культурăпа спорт, шкулсен, ача сачĕсен пурнăçне сӳтсе явнипе пĕрлех тĕл пулура пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕсене те пăхса тухрĕç. Культура çурчĕсенче юсав ĕçĕсем иртерни те пĕлтерĕшлĕ. Шарпаш ял клубне юсама 400 пин тенкĕ ытла тăкаклана. Ял тăрăхĕнчи çулсен вăрăмăшĕ – 38,9 км. Иртнĕ çулта вĕсене тытса тăма выränти бюджетран 358 пин тенкĕ ытларах уйăрнă. Олег Анисимович çĕрпе усă курас, хваттерсене приватизацилес ыйтусене те уçăмлатрĕ. Виçĕ тата ытларах ачаллă çемьесене ял çывăхĕнчи Первомайскипе Цветочная урамĕсенче çĕр лаптăкĕсемпе тивĕçтерессине каларĕ, ял тăрăхĕнче спорт ăмăртăвĕсем, уявсем йышлă иртнине асăнчĕ, 2018 çулти тĕллевсене те палăртрĕ.

Александр Кудряшов ял çыннисене районăн социаллă пурнăçĕпе тата экономика аталанăвĕпе паллаштарчĕ. Вячеслав Рафинов ачасен çураласлăхĕ çинче чарăнса тăчĕ, Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн çакна ӳстерес тĕллевлĕ пуçарăвĕсемпе паллаштарчĕ.

Валентина Прокопьева аналла 350 м тăсăлакан урама çул хăçан сарассипе кăсăкланчĕ. «Депутатсен пухăвĕнче хăш çулсене юсама укçа уйăрассине пăхса тухăпăр»,– шантарчĕ пуçлăх. Çак йĕркесен авторĕ Хорнсор пĕвине Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕн балансне кĕртес тата юсас ыйтăва тăратрĕ. «Дамбăсене юсама пысăк укçа кирлĕ, ял тăрăхĕн проект документчĕсене хатĕрлемелле. Унтан Çут çанталăк министерствине ыйтупа тухмалла», – ăнлантарчĕ Александр Витальевич. Владимир Андреев Кипечкассинчи суйлав участокне Атăлъял клубне куçарма ыйтрĕ. Кипечкасси лавккинче выränа хĕсĕкрех. Суйлав участокне Атăлъялăн культура вучахне куçарсан аван пулассипе пурте килĕшрĕç. Юлашкинчен ял тăрăх пуçлăхĕ Атăлъялпа Хорнсор ялĕсенчи хастарсене тав хучĕсемпе чысларĕ. Вĕсен шутĕнче Нина Матюшкина, Алексей Андреев, Валентина Антипова, çак йĕркесен авторĕ тата ыттисем пулчĕç. Ял çыннисене Кăшавăшри культура çурчĕ çумĕнчи Светлана Калишова ертсе пыракан «Алтăр çăлтăр» пултарулăх ушкăнĕ концертпа савăнтарчĕ. Светлана Васильевна пĕлтернĕ тăрăх, вăл 10 çынран тăракан ушкăна 5 çул ертсе пырать. Унăн ашшĕ, Василий Тимофеевич Моисеев, Станъял ялĕнчен пулнă. Чи тĕлĕнмелли – «Таван Ен» хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕпе Кăрмăшри Регина Черновăпа паллашни пулчĕ. Маларах асăннă пултаруллă çынсемпе пĕрле хăйсен ăсталăхне сцена çинчен Сергей Порфирьев, Алина Кириллова, Елена Фролова, Вера Степанова кăтартрĕç.

НИКОЛАЙ СМИРНОВ, АТĂЛЪЯЛ

СĂМАХ МАЙ

Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕ 30948 га йышăнать, пĕтĕмпе 16 ял, унта 4469 çын пурăнать. Пĕлтĕр 33 ача çуралнă, пурнăçран 58-шĕ уйрăлнă. Çар комиссариатĕнче учетра 1212 çын тăрать, 16-ăн çара кайнă. Атăлъялта çартан пăрăнакансем çук.

▶ РАЙОНТА ЮЛАШКИ ÇУЛСЕНЧЕ ЯЛ ХУÇАЛĂХ ПĔЛТЕРĔШЛĔ 600 ГА ÇĔР ЛАПТĂКНЕ ÇУРТ–ЙĔР СТРОИТЕЛЬСТВИ ВАЛЛИ КУÇАРНĂ, ВĔСЕНЧЕН 30 ГА КĂНА ÇАВРĂНĂША КĔНĔ

Парăмçăсене кавир çине...

● АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ

1 Вĕсен пĕтĕмĕшле хакĕ – 15,3 млн тенкĕ. Районти шкулсенче тата ача сачĕсенче юсав ĕçĕсем ирттернине, 4 шкула çĕнĕ шкул автобусĕсемпе тивĕçтернине, ÿссе пыракан ăрăва спортпа туслашма, сывă пурнăç йĕркине пăхăнма пур услови те пуррине палăртрĕ Владимир Димитриев.

Залран ыйтусем пулчĕç

В. Шумилова сăт ÿкерчĕкĕ

Парăмçăсем яваплăха туймаççĕ

Михаил Игнатьев доклада итленĕ хыççăн хăш-пĕр самант патне тепĕр хут таврăнчĕ. Районти вăтам ĕç укçипе çыхăнни вĕсенчен пĕри пулчĕ. Çамрăксене района илĕртмелли майсем пирки ыйтрĕ. Владимир Димитриев предприятисене инвестицисем хывни çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркеллеме май парассине, вĕсенче тивĕçлĕ ĕç укçи пуласса кĕтме шанăç пуррине пĕлтерчĕ. «Ĕç укçи тивĕçтермесен çак çамрăксем урăх региона ĕçлеме тухса кайĕç», – асăрхаттарчĕ Михаил Васильевич хавхаланса сцена çинчен тин çеç çутă сăнсемпе аннă стипендиатсем енне кăтартса. Вăл ĕç укçин виçине ÿстерес тĕллевпе вырăнта тăрăшса ĕçлеме сĕнчĕ. Михаил Игнатьев ял хуçалăхĕнче пурнăçа кĕртме хатĕр проектсен йышĕпе те кăсăкланчĕ. «Ун пеккисем хальлĕхе – 7», – пĕлтерчĕ Владимир Димитриев.

Муниципалитет пурлăхĕсене тара илсе предприятисемпе организацисем вĕсемпе туллин усă кураççĕ, анчах та аренда укçине вăхăтра куçармаççĕ, тÿлеве тăсаннисем те пур. Кун йĕркинчи тепĕр пысăк ыйту çакăнпа çыхăннăччĕ. «Арендаторсем муниципалитет пурлăхĕпе тупăш илеççĕ те, каярах тарса çÿреççĕ. Ун пеккисемпе мĕнлерех ĕç ирттеретĕр. Парăмсене хăçан татма палăртаççĕ?» – кăсăкланчĕ вăл вырăнти ертÿçĕсене асăннă ыйтупа çинерех тăрса ĕçлеме хушса. Михаил Игнатьев комисси ĕçне вăйлатмалли, йĕркене пăсакансене саккунпа килĕшÿллĕн явап тыттармалли, тÿрĕ кăмăллă мар арендаторсемпе килĕшĕве татмалли пирки асăрхаттарчĕ. Кăçал январĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта парăм 8520,8 пин тенке çитнĕ. Вĕсенчен 1680,7 пин тенкĕ парăм «СМК «АРТЕК» ООО, 1093,4 пин тенкĕ – «Восток» ГК, 532,6 пин тенкĕ – «Туруновский» СХПК тÿпи çинче.

Çурт-йĕр хăпартассипе çыхăннă ыйту та çивĕч. Строительство компанийĕсем çĕре туяннă, анчах хальлĕхе пушах вырттараççĕ. «Паянхи куна миçе пин га çĕр лаптăкне усă курмаççĕ?» – ыйтрĕ муниципалитет ертÿçинчен Михаил Игнатьев. Районта юлашки çулсенче ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ 600 га çĕр лаптăкне çурт-йĕр строительстви валли куçарнине, вĕсенчен 30 га кăна çаврăнăша кĕнине пĕлтерчĕ Владимир Димитриев. «Районта пĕр гектар çĕр лаптăкĕ те ахаль выртмалла мар», – çирĕппĕн каларĕ регион Пуçлăхĕ.

Спорт ăмăртăвĕсенче Шупашкар район командине пьедесталăн чи çÿллĕ пусми çинче курас килнине те пытармарĕ Михаил Игнатьев. Владимир Димитриев район чысне хÿтĕлекенсем кăтартусене лайăхлатса пынине ĕнентерчĕ. «Паян 2-мĕш пулнă, ыран 1-мĕш пулатпăр», – тенĕ сăмахсене зал та, республика Пуçлăхĕ те алă çупса кĕтсе илчĕç.

«Çывăрма юрамасть»

Район бюджечĕпе усă курни пирки Чăваш Ен финанс министрĕн çумĕ Фарида Муратова доклад туса пачĕ. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, 2017 çулта республика бюджетĕнчен района 644 млн тенкĕ уйăрнă. Çав вăхăтрах ахаль çынсен тупăш налогĕсем, пĕрлехи налогсен виçи чакнă. Ахаль çынсен тупăшĕ çине хуракан налог енĕпе парăм 28 млн тенкĕпе танлашать, çав шутра 15 млн тенкĕ – «Чăвашбройлер» ОАОн.

Кăçал района тата ытларах укçа-тенкĕ – 830 млн тенкĕ – уйăрма палăртнă, вĕсенчен 280,4 млн тенкĕ – бюджет сферин ĕçченĕсене ĕç укçипе тивĕçтерме. Инициативлă бюджет программине хастартарах хутшăнма чĕнсе каларĕ регион Пуçлăхĕ. Вăл ял тăрăх пуçлăхĕсене ура çине тăратрĕ. «Кам конкурса пĕр проекта та сĕнмен, алă çĕклеме ыйтатăп», – доска умне чĕннĕ шкул ачи пек пĕрпĕрин хыçне пытанчĕ хăшĕ-пĕри. Ерипен-ерипен пĕри алă çĕклерĕ, тепри – пурĕ 5-ĕн. Проекта хутшăнакансем вара мăнаçланчĕç. «Хăвăр тăван тăрăхăра юрататăр е çук?» – каллех çирĕппĕн ыйтрĕ Пуçлăх. Шăп тăракан пуçлăхсенчен пĕри «юрататпăр» теме хăюлăх çитерчех. Хурав тивĕçтерчĕ-ши Михаил Игнатьева, çук-ши – вăл ял тăрăх пуçлăхĕсене çак ĕçре хастартарах пулма, вырăнти халăхпа тачă çыхăнса ĕçлеме чĕнсе каларĕ. «Куçсенче хĕлхем курмастăп, çывăрма юрамасть», – хăтăрса илчĕ вăл вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ертÿçисене.

Альбина Егорова налогсене вăхăтра тÿлемен парăмçăсенчен укçа-тенке шыраса илес ĕçе муниципалитетра вăйлатма сăмах пачĕ, çак енпе ял тăрăх пуçлăхĕсене тухăçлăрах ĕçлеме чĕнсе каларĕ.

Район больницин ĕçĕхĕлĕпе унăн ертÿçи Елена Петрова паллаштарчĕ. Вăл ялсенче пур ФАП та ĕçленине, «Земство фельдшерĕ» программăпа района 3 çамрăк фельдшер ĕçлеме килмеллине, ветерансене, çăмăллăхпа усă куракансене тивĕçтермелли эмел çителĕклине асăнчĕ. Михаил Игнатьев больницăн ĕçĕхĕлĕнче лайăх улшăнусем пуррипе килĕшрĕ, çапах та ОМС территори фончĕн статистика кăтартăвĕсем ăна çырлахтармарĕç. «Ыйтăма хутшăннисенчен 96% больница ĕçĕ-хĕлĕпе кăмăллă», – ĕнентерме тăрăшрĕ Елена Петрова. «Ун пекки пулма пултараймасть, хăвăр сăмахăрсене каялла илĕр», – хăйĕн шухăшĕ çинче çирĕппĕн тăчĕ регион Пуçлăхĕ. Çĕньял ял тăрăх депутачĕ вырăнти пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕн офисĕн ĕçĕпе кăсăкланчĕ: вырăнти халăх педиатр çуккипе, электронлă регистратура йĕркеллĕ ĕçлеменнипе, лаборатори хăйĕн ĕçне чарса лартнăран анализсене вырăнта парайманнипе, медицина учрежденийĕ умĕнчи çăмăл машинăсене лартма вырăн пулманнипе кăмăлсăр. Михаил Игнатьев халăха медицина пулăшăвĕн пахалăхне ÿстерессипе çанă тавăрса ĕçлеме хушрĕ. Çĕньял ял тăрăхĕн çĕнĕ пуçлăхĕ Андрей Михайлов çу кунĕсем çитичченех медицина учрежденийĕ умĕнчи лаптăка йĕркене кĕртме сăмах пачĕ.

Çĕнĕ шкул, сĕт хакĕ, пахалăхсăр шыв...

Карачура хĕрĕ Мария Абдуллина республика ертÿлĕхне пĕлтĕр çулталăк вĕçĕнче хута янă çутă та хăтлă ФАПшăн тав туса ялта çĕнĕ шкул тăвас ыйтăва хускатрĕ. Михаил Игнатьев карачурасен чун ыратăвне пĕлнине, ăна татса парас тĕллевпе ларутăрăва тишкернине, çулйĕр шыранине палăртрĕ.

Çулталăк каяллахи отчетлă канашлура хускатнă çивĕч ыйтăва татса парасса кĕтсе илеймен Çĕньял ял тăрăхĕнче пурăнакан пĕр арçын – ăна тепĕр хут çĕклерĕ. Шыв башнисем япăхса кайни, унти шыв пахалăхĕ тивĕçтерменни – акă мĕн канăççăрлантарать ăна. Чăваш Ен Пуçлăхĕ районти шывпа тивĕçтерекен çăл куçсене тăхтамасăр учета илме, чи аварилисене юсама хушу пачĕ.

Пухăннисен умĕнче Раççей Федераци Думин депутачĕ Николай Малов, район пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Алевтина Исаева тухса каласрĕç. «Чурачикское» ОАО ертÿçи Евгений Шалеев сĕт хакĕ чакнишĕн пăшăрханнине пĕлтерчĕ. Николай Малов çак ыйтăва Патшалăх Думин шайĕнчех пăхса тухнине, тивĕçлĕ мерăсем йышăнасса пĕлтерчĕ.

Канашлăва Михаил Игнатьев республика малашлăхĕ пысăккине çирĕп шанни пирки каланипе вĕçлерĕ. Чăваш Енре 81 пин ытла çемье федерацин амăшĕн капиталĕпе усă курнине, вĕсенчен 95% унпа усă курса пурăнмалли условисене лайăхлатнине аса илтерчĕ вăл. «Пирĕн тĕллев – çамрăксемшĕн лайăх пуласлăх тăвасси, вĕсене кăмăлсипет тĕлĕшĕнчен çемье никĕсĕ çинче воспитани парасси. Çамрăксем – Раççей, Чăваш Ен, район пуласлăхĕ»,– терĕ Пуçлăх. Ку сăмахсем тивĕçлĕ ăрăва хатĕрлекен ветерансене чунтан тав тунă пекех илтĕнчĕç.

ВЕРА ШУМИЛОВА

● ЫЙТУ-ХУРАВ

Шăматкун та йышăнать

? Ĕçлекен çыннăн больницăна сывлăхне тĕрĕслемешкĕн чылай чухне ĕçрен ыйтса кайма тивет. Çавăнпа шăматкун та Ишлейри больница пациентсене йышăнсан тем пек аванччĕ те...

■ *Валерий СЕМЕНОВ, Ишлей сали*



Елена ПЕТРОВА,
Шупашкар район больницин тĕп тухтăрĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ:

– Кашни шăматкун Шупашкар районĕнчи 2-мĕш больницăра пациентсене пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕ, хирург, стоматолог йышăнаççĕ. Çирĕплетнĕ графикпе килĕшÿллĕн, уйăхра икĕ шăматкун невролог ĕçлет, УЗИ тата эндоскопи тĕрĕслевĕ тăваççĕ. Çавăн пекех кашни шăматкун анализсем йышăнаççĕ, ренгенологи тĕрĕслевĕ ирттереççĕ.

Çакна та каласа хăвармалла, юна биохими тĕрĕслевĕ валли тунтикунпа ытларикун кăна илеççĕ. Мĕншĕн тесен çак тĕрĕслевсене «Хулари 1-мĕш номерлĕ клиника больници» централизациленĕ лабораторинче ирттереççĕ. Акушер-гинеколог шăматкун йышăнмасть, çакă паянхи куна тухтăр тулли мар ĕç кунĕн условийĕсенче ĕçленипе çыхăннă. ■

Почта кун сиктерсе ĕçлет

? Ку çырăва вырăнти халăх ыйтнипе çыртăм-ха. Сăмах Ишек салинчи почта уйрăмĕ пирки пырать. Темиçе уйăх ĕнтĕ вăл эрнере виçĕ кун çеç ĕçлет. Нумаях пулмасть ялти клубра концерт пулчĕ те çак ыйтăва хускатрĕç. Банк уйрăмĕ эрнери мăшăрсăр кунсенче ĕçлет, почта вара – эрнери мăшăр кунсенче. Марка енче пурăнакансем Ишеке пырсан хăйсен ыйтăвĕсене икĕ учреждените те тÿрех татса пама пултарнă тăк, халĕ вĕсен çакна валли темиçе кун та çÿреме тивет. Ватăрах çынсемшĕн вара ку йывăртарах. Почта уйрăмĕ эрнере виçĕ кун ĕçлеме пуçланин сăлтавĕ мĕнре-ши?

■ *Екатерина ГРИГОРЬЕВА, Мăн Марка*

Николай СКВОРЦОВ,
Шупашкар почтамчĕн пуçлăхĕ:

– 2017 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен Ишекри почта уйрăмĕ эрнере 3 кун – ытларикун, кĕçнерникун, шăматкун – кăна ĕçлеме пуçларĕ. Çакă почтăна çÿрекенсен, ун пулăшăвĕпе усă куракансен шучĕ чакнипе çыхăннă. Урăхла каласан çынсем почтăна хаçат çырăнма е туянма сахал пыраççĕ. Çавна пула почта уйрăмне тупăш сахал килет. Почтальонсем пенсие кашни киле çитерменнипе те çыхăннă. Халĕ почта уйрăмĕ садик çуртĕнче вырнаçнă. Шупашкар районĕнче почтальонсем урлă хаçат çырăнасси йывăрăн пынине палăртмалла. ■

РЕДАКЦИРЕН: *йăтма йывăррипе сăлтавласа районта почтальонсем хаçат çырăнтарма хирĕçленине пĕрре мар илтнине кура çакăн пек тĕслĕхсем пирки тÿрех редакцие 2-12-59 телефон номерĕпе шăнкăравласа пĕлтерме ыйтатпăр. Тÿрĕ кăмăллă мар ĕçченсене явап тыттарассипе çыхăннă ыйтăва сăнаса тăрассине Раççей почтин республикăри управленийĕ те хăйĕн çине илĕ.*

Чекран хăтăлма васкамалла мар

? Обществăлла транспортпа çÿренĕ чухне нумайăшĕ пĕрлехи транспорт карттипе усă курать. Ăна ăнсăртран çухатсан е хуçса пăрахсан мĕн тумалла-ши?

■ *Светлана НИКИТИНА, Кÿкеç*

Чăваш Енри Транспорт министерствинче çакăнта кивĕ чексем пулăшма пултарни çинчен ăнлантарчĕç.

Чăнах та, кун пек тĕслĕхсем пулаççĕ иккен. Енчен те карттăна çухатсан е хуçса пăрахсан çыннăн Пĕрлехи транспорт карттин кирек хăш мини-офисне пырса карта ĕçне чарса лартмалла. Адрессене интернет-сайтра шыраса тупма пулать. Çухатнă е хуçса пăрахнă карта счечĕ çинчен укçа-тенке урăххи çине куçарма та пулать – транспорт карттин вăхăчĕ кăна ан тухтăр. Çакăн валли тÿлев чекне кăтартмалла, çавăнпа та терминал квитанцийĕсене нихăçан та тÿрех кăларса пăрахма васкамалла мар. Вĕсем çинче карта серине кăтартнă. ■

ШУТА ИЛМЕ

февралĕн 19-мĕшĕнче 10 сехетрен пуçласа 13 сехетчен Шупашкар район прокурорĕ çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тытăмĕнче закона пăхăнассипе çыхăннă ыйтусемпе граждансене район администрацийĕнче йышăнать. Тĕл пулу район администрацийĕн, управляющи компанисен ертÿçисем хутшăннипе иртет. Унта çырăнмалли телефон номерĕсем: 2-12-44 (район администрацийĕ), 2-13-32 (район прокуратури).

Все объявления дублируются на сайте www.tavanen.ru

МОДУЛЬНАЯ РЕКЛАМА 1 кв. см. – от 26 руб.

СервисЦ РЕМОНТ ХОЛОДИЛЬНИКОВ ТЕЛЕВИЗОРОВ Тел.: 8-927-990-46-75 07-37

СервисЦ Триколор ТЕЛЕКАРТА МТС УСЛУГИ ОБМЕН Тел.: 8-927-990-46-75 07-38

ПАМЯТНИКИ от 2200 рублей
АО «Базальт» г. Чебоксары, ул. Гладкова, д. 7.
предлагает ПАМЯТНИКИ, КРЕСТЫ ИЗ МРАМОРНОЙ КРОШКИ, ЧЕРНОГО ГРАНИТА, СЕРОГО И БЕЛОГО МРАМОРА.
● Столики, скамейки, ограды, венки.
● СКИДКИ, РАССРОЧКА ПЛАТЕЖА. ГАРАНТИЯ.
ДОСТАВКА И УСТАНОВКА. БЕСПЛАТНОЕ ХРАНЕНИЕ.
☎ 8 (8352) 56-29-68. 01-37

РЕКЛАМА ТАТА ПЁЛТЕРӲ 8(83540) 2-12-59

Сдаем в аренду офисное помещение площадью 23,7 кв. м. на 6 этаже редакционно-издательского комплекса «Дом печати»: г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13. Охрана. Видеонаблюдение. Парковка. Здание телефонизировано, интернет – оптиковолоконные линии связи. Цена 176 руб/кв.м. НДС нет. Стоимость аренды не включает коммунальные платежи. Тел.: 67-15-51, 20-10-85 в раб. дни с 8-00 до 17-00.

СУТАТПĂР ПРОДАЕМ

09-37. Сено с доставкой. Тел.: 8-917-652-96-14.

02-10. Ячмень, пшеницу, мелкий и семенной картофель. Доставка. Тел.: 8-961-338-21-08.

02-12. Çумăр курман тюклана костер утă. 100 тенкĕ. Тел.: 8-937-383-61-78. Альберт.

02-22. Продаю памперсы. № 2. Тел.: 8-960-308-37-91.

02-27. Поросят, 20-25 кг. Доставка. Тел.: 8-960-304-52-90.

02-24. Сено в тюках. Тел.: 8-960-308-89-38.

01-20. Сено в тюках. Тел.: 8-927-853-42-96.

10-57. Коров, телок, бычков (молодняк). Доставка. Тел.: 8-987-126-30-07.

12-03. Продаю к/б блоки от 30 рублей, доски, кирпич, профнастил. Услуги манипулятора. Тел.: 8-903-345-53-24, 8-903-322-25-32.

12-81. Пластиковые ОКНА от 2400 руб за деревенское окно, утепленное в три стекла. Зимние суперцены. Скидки до 50%. Заводское качество. Специальный зимний монтаж. Тел.: 8-927-668-69-55.

ТУЯНАТПĂР КУПИМ

05-14. Куплю КРС. Дорого. Тел.: 8-905-197-61-66.

01-32. Скотину, бычков, коров. Вынужденный забой. Дорого. Тел.: 8-906-382-99-99. Дима.

02-04. Старые подушки, перины. Пух гусиный и утиный. Тел.: 8-999-609-50-32.

ТĔРЛĔРЕН РАЗНОЕ

02-18. Утерянный аттестат В № 517658, об окончании среднего полного образования на имя Командировой Надежды Викентьевны выданный МБОУ «Большекатрасьская СОШ» Чебоксарского района 1988 г., считать недействительным.

ÇĔР ЗЕМЕЛЬНЫЕ ОТНОШЕНИЯ

02-21. ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Кадастровый инженер Фёдорова А.Ю. адрес: ЧР, п. Кугеси, ул. Советская, д. 50, офис 311, тел. 8(83540)2-26-14, эл. почта mega221@mail.ru, квалификационный аттестат № 21-15-40, № регистрации в государственном реестре лиц, осуществляющих кадастровую деятельность - 9574, подготовила проект межевания земельных участков, образованных путем выдела из землепользования СХПК-колхоза им. Свердлова (кадастровый номер 21:21:000000:271), местоположение: ЧР, Чебоксарский район, Акулевское сельское поселение.

Заказчиком работ по подготовке проекта межевания земельных участков является Михайлова Любовь Васильевна, адрес ЧР, Чебоксарский район, д. Сютпылых, ул. Лесная, д. 5.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Советская, д.50, офис 311.

Обоснованные возражения относительно размера и местоположения границ, выделяемых в счет земельных долей земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Советская, д.50, офис 311, а также в отдел кадастрового учета - ФГБУ «Федеральная кадастровая палата Федеральной службы государственной регистрации, кадастра и картографии» по Чувашской Республике-Чувашии, расположенного по адресу: ЧР, г. Чебоксары, Московский проспект, д. 37. 02-28

Февралĕн 24-мĕшĕнче Кӳкеçри «Бичурин тата паянхи самана» музейра Совет салтакĕсен Германи çĕрĕсем çинче çар тивĕçне пурнăçланă ушкăн ветеранĕсен тĕл пулăвĕ иртет. Мероприяти 10 сехетре пуçланать.

Итоги жеребьевки по определению даты и места опубликования на платной основе предвыборных агитационных материалов кандидатов в Президенты Российской Федерации на выборах 18 марта 2018 года

Жеребьевка состоялась 13 февраля 2018 года в АУ ЧР «Редакция газеты «Таван Ен» Мининформполитики Чувашии

№№	ФИО кандидата	Дата рождения кандидата	Субъект выдвижения	Заявка на жеребьевку
1	Бабурин Сергей Николаевич	31.01.1959	ОБЩЕСТВЕННАЯ ОРГАНИЗАЦИЯ – ПОЛИТИЧЕСКАЯ ПАРТИЯ «РОССИЙСКИЙ ОБЩЕНАРОДНЫЙ СОЮЗ»	нет
2	Грудинин Павел Николаевич	20.10.1960	Политическая партия «КОММУНИСТИЧЕСКАЯ ПАРТИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ»	нет
3	Жириновский Владимир Вольфович	25.04.1946	Политическая партия ЛДПР – Либерально-демократическая партия России	нет
4	Путин Владимир Владимирович	07.10.1952	Группа избирателей, созданная для поддержки самовыдвижения кандидата на должность Президента Российской Федерации В.В. Путина	нет
5	Собчак Ксения Анатольевна	05.11.1981	Всероссийская политическая партия «Гражданская инициатива»	нет
6	Сурайкин Максим Александрович	08.08.1978	Политическая партия КОММУНИСТИЧЕСКАЯ ПАРТИЯ КОММУНИСТЫ РОССИИ	нет
7	Титов Борис Юрьевич	24.12.1960	Всероссийская политическая партия «ПАРТИЯ РОСТА»	нет
8	Явлинский Григорий Алексеевич	10.04.1952	Политическая партия «Российская объединенная демократическая партия «ЯБЛОКО»	нет

Уважаемые жители и гости Кугеси!
ПРИГЛАШАЕМ
на выставку-продажу, а так же
БЕСПЛАТНО ПРОВЕРИТЬ ЗРЕНИЕ
И ЗАКАЗАТЬ ОЧКИ СО СКИДКОЙ 5%*
22 ФЕВРАЛЯ
с 10.00 до 15.00
в Центре Культуры и Досуга
по адресу: ул. Шоссейная, д.17
подробности акции по тел.: 8 917 651 21 21
Лицензия №ФС-99-03-002797 от 11.04.12г. выдана Федеральной службой по надзору в сфере здравоохранения и социального развития
ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ
НЕОБХОДИМА КОНСУЛЬТАЦИЯ СПЕЦИАЛИСТА
* ИП Михайлов А.В. Серия 21 № 001503960 от 26 октября 2004г.
02-25 реклама

СтройДвор по доступным ценам
ИП Майков В.Н. Чебоксарский р-н, д. Чиршкасы, ул. Куйбышева, 1
☎ 8(8352) 68-27-92
8-902-328-27-92
☎ 8(83540) 2-15-73, 2-11-76
▪ ДОСКА ОБРЕЗНАЯ
▪ БРУС ЛЮБОГО СЕЧЕНИЯ
▪ БЛОК-ХАУС
▪ ИМИТАЦИЯ БРУСА (16;25;35 мм)
▪ НАЛИЧНИК
▪ ЦЕМЕНТ
▪ ЛЬНОВАТИН, ПАКЛЯ, ДЖУТ
▪ ГИПСОКАРТОН
▪ ПЕНОПОЛИСТИРОЛ
▪ ФАНЕРА
▪ АСБОТРУБА ненапорная
▪ ШИФЕР, РУБЕРОИД
▪ МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦА
▪ ПРОФНАСТИЛ
ДВЕРИ филенчатые: межкомнатные банные (хвоя, липа)
ВАГОНКА
БЛОК-ХАУС
УТЕПЛИТЕЛЬ
ДОСКА шпунтованная (25,35,45 мм)
ПОГОНАЖНЫЕ ИЗДЕЛИЯ
КОМПЛЕКТУЮЩИЕ К ЛЕСТНИЦАМ
✱перила, ✱поручни, ✱балясины, ✱тетива, ✱ступени, ✱столбы (хвоя)

ГИБКАЯ СИСТЕМА СКИДОК
12-44

Организация временного трудоустройства безработных граждан, испытывающих трудности при поиске работы

Организация временного трудоустройства безработных граждан, испытывающих трудности в поиске работы, направлена на обеспечение права граждан на труд, на вознаграждение за труд и удовлетворение потребностей в работе и заработке, а также сохранение мотивации к труду и осуществляется на вакантные временные рабочие места, предоставляемые Работодателями.

Финансирование мероприятий по организации временного трудоустройства безработных граждан, испытывающих трудности в поиске работы, и создание временных рабочих мест осуществляется на основании договоров, заключенных между Центром занятости населения и организацией – Работодателем.

При организации временного трудоустройства, выделяемые Государственными учреждениями Центрами занятости населения финансовые средства, предназначаются для оказания материальной поддержки безработным гражданам, принимающим участие во временных работах.

Материальная поддержка безработных граждан, участвующих во временных работах, начисляется как дополнительная выплата сверх выплачиваемой Работодателем заработной платы. При этом материальная поддержка не входит в фонд оплаты труда работодателя и не является составной частью зарплаты работника. Месячная заработная плата работника, отработавшего норму рабочего времени и трудовые обязанности, не может быть ниже минимального размера оплаты труда, установленного в Чебоксарском районе Чувашской Республики.

Материальная поддержка безработных граждан, принимающих участие во временных работах, начисляется за фактически выполненную работу, пропорционально отработанному балансу рабочего времени, а также за период временной нетрудоспособности.

В мероприятиях могут участвовать граждане, зарегистрированные в установленном порядке в службе занятости Чебоксарского района.

УЧАСТНИКИ ПРОГРАММЫ

Временное трудоустройство предполагает социально-трудовую адаптацию безработных граждан, испытывающих трудности в поиске работы, ориентированную на оказание адресной поддержки при трудоустройстве с учетом особенностей каждой категории безработных граждан, участвующих в работах.

Категории безработных граждан, участвующих в программе временного трудоустройства (в соответствии с п.2 статья 5 Закона Российской Федерации «О занятости населения в Российской Федерации») и необходимые требования по принадлежности к категориям:

Инвалиды

▪ наличие индивидуальной программы реабилитации инвалида (ИПРА) с заключением о рекомендуемом характере и условиях труда

Молодежь

▪ возраст от 16 до 18 лет

Лица предпенсионного возраста

▪ не ранее и не позднее двух лет до наступления возраста, дающего право выхода на трудовую пенсию по старости, в т.ч. досрочно назначаемую трудовую пенсию по старости

Граждане, уволенные с военной службы и члены их семей

▪ военный билет, справка военного комиссариата о периоде службы - для уволенных с военной службы и из органов внутренних дел без права на пенсию

▪ свидетельство о расторжении брака - для членов их семей

Лица, освобожденные из учреждений, исполняющих наказание в виде лишения свободы

▪ справка об освобождении

▪ справки об учете времени работы в период отбывания наказания, засчитываемого в общий стаж, и о заработке за последние три месяца (если имеется)

Одинокие и многодетные родители, воспитывающие несовершеннолетних детей или детей инвалидов

▪ свидетельства о рождении детей,

▪ свидетельства об инвалидности детей

▪ один из следующих документов: свидетельство о смерти одного из супругов,

▪ справку из управления социальной защиты населения,

▪ свидетельство о расторжении брака

Граждане, подвергшиеся воздействию радиации

▪ удостоверение установленной формы о воздействии радиации вследствие чернобыльской и других радиационных аварий и катастроф

Беженцы и вынужденные переселенцы

▪ удостоверение установленной формы

▪ регистрации по месту пребывания

Работодатель – юридическое лицо или индивидуальный предприниматель, зарегистрированный в Чебоксарском районе, независимо от их организационно-правовой формы и формы собственности, может принять участие в реализации мероприятий по временному трудоустройству.

ДОКУМЕНТЫ, НЕОБХОДИМЫЕ ДЛЯ ПОЛУЧЕНИЯ БЕЗРАБОТНЫМИ ГРАЖДАНАМИ ГОСУДАРСТВЕННОЙ УСЛУГИ ПО ОРГАНИЗАЦИИ ВРЕМЕННОГО ТРУДОУСТРОЙСТВА

Документами, необходимыми для получения безработными гражданами государственной услуги по организации временного трудоустройства, являются:

• заявление – анкета о предоставлении государственной услуги по организации временного трудоустройства или согласие с предложением о предоставлении государственной услуги по организации временного трудоустройства;

• паспорт гражданина Российской Федерации или документ, его заменяющий - для граждан Российской Федерации;

• документы, удостоверяющего личность лица без гражданства - для лиц без гражданства;

• документ об образовании – для безработных граждан из числа выпускников, впервые ищущих работу;

• трудовая книжка или документ, ее заменяющий, кроме граждан, впервые ищущих работу (ранее не работавших);

• индивидуальная программа реабилитации инвалида, выдаваемая в установленном порядке - для граждан, относящихся к категории инвалидов;

• приказ Центра о признании гражданина в установленном порядке безработным.

ПОРЯДОК ВЫПЛАТЫ МАТЕРИАЛЬНОЙ ПОДДЕРЖКИ

Перечисление материальной поддержки осуществляется ежемесячно либо на личные лицевые счета трудоустроенных безработных граждан в отделениях банка, с которым у Центра имеется договор на банковское обслуживание, либо на личные банковские карты за фактически выполненную работу, пропорционально отработанному балансу рабочего времени, а также за период временной нетрудоспособности.

В соответствии с пунктом 2 статьи 251 Налогового Кодекса РФ материальная поддержка безработным гражданам при определении налоговой базы не учитывается, не входит в фонд оплаты труда работников организации, не облагается единым социальным налогом и иными видами налогов.

Безработные граждане, испытывающие трудности в поиске работы, желающие принять участие в организации временного трудоустройства могут обратиться в Центр занятости населения по адресу: п. Кугеси, ул. Советская, д. 23, тел.: (83540) 2-11-77.

Таван Ен

Учредитель (соучредители): Министерство информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики, Автономное учреждение Чувашской Республики «Редакция газеты «Таван Ен» Министерства информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике - Чувашии 05 октября 2012 г. **ПИ № ТУ 21-00231.**

Газета распространяется в Чебоксарском районе, гг. Чебоксары и Новочебоксарск, а также в райцентрах Чувашской Республики

Выходит по четвергам на чувашском языке, с подачей некоторых материалов на русском.

Рукописи, фотографии, рисунки не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. Редакция не вступает в переписку с читателями. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель. Материалы в рубрике «Экономика хăвачĕ» публикуются платно.
При подготовке материалов использованы информация и фотографии с сайта администрации Чебоксарского района, официального портала органов власти Чувашии www.cap.ru.

Подписной индекс газеты 54820 П6022

Адрес редакции и издателя: **АУ «Редакция газеты «Таван Ен» Мининформполитики Чувашии**
429500, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13
E-mail: **tavan-en21@yandex.ru** Сайт: **www.tavanen.ru**
Факс: 8(83540) **2-12-59, 8(8352) 20-10-85**

Тел. для справок – 8 (83540) **2-12-59**. | ***Отделы:*** новостей и общественной жизни **– 8 (83540) 2-21-88,** | местного самоуправления, социальной политики и организационно-массовой работы **– 8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 20-10-71,** | рекламы и подписки **– 8 (83540) 2-12-59,** | бухгалтерия – **8 (8352) 20-10-85,** | гл. редактор – **8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 20-10-85.**

Прием объявлений и рекламы, подписка с 8.00 до 17.00
E-mail: **tavanen@mail.ru** **Тел.:** 8(83540) **2-12-59**

И.о. главного редактора **В.А. ВЫШИНСКАЯ**

Дежурный по номеру **В.Ф. ШУМИЛОВА**

Материалы, обозначенные знаком Ⓟ, а также в рубриках «Саламлатпăр», «Тав тăватпăр», публикуются на платной основе.
© Перепечатка или иное воспроизведение материалов без письменного разрешения редакции запрещена.

Печать офсетная.
Объем 3,0 печ. л.
Время подписания в печать: по графику – 18.00, фактически – 17.30 14.02.2018 г.
Дата выхода в свет: 15.02.2018 г.
Тираж **2900 экз.**
Заказ № 454
Номер отпечатан в ОАО «ИПК Чувашия» 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
Цена свободная

Чи паха парне мĕн хак?

«Тăван Ен» хаçатри, www.tavanen.ru сайтри салам чухлĕ! 500 тенкĕ! Квитанципе 40% йӳнĕрех.

Саламсене телефонпа та йышăнатпăр: 8(83540) 2-12-59

УТЕПЛЕНИЕ ДОМОВ
пустотелых стен, полов, чердаков
и мансард ПЕНОИЗОЛОМ И ЭКОВАТОЙ
☎ 8-919-669-16-66. ЗИМНИЕ СКИДКИ!
02-13

● СЫВĂ ПУРНĂÇ

Олимпиецсене хавхалантарса – йĕлтĕр йĕрĕпе

«Раççей йĕлтĕр йĕрĕ-2018» массăллă чупăва республикăра 60 пин ытла çын хутшăнчĕ

Шăматкун, февралĕн 10-мĕшĕнче, пĕтĕм çĕршывĕпе, çав шутра Чăваш Енре те, ватти те, вĕтти те йĕлтĕр сырса старта тухрĕ. Çак хĕвеллĕ хĕллехи сивĕ кун чи пĕчĕк йĕлтĕрçĕсем 450 м дистанцие парăнтарчĕç, аслисем вара йăлана кĕнĕ йĕркепе 3 çухрăма хыçа хăварса вăй-хăватне тĕрĕслерĕç. Спорт ветеранĕсем «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» ăмăртăва пĕрремĕш хут хутшăнакансене чăн-чăн мастер-класс кăтартса пачĕç.

А. Тихонова сăнӳкерĕкĕсем

«Раççей йĕлтĕр йĕрĕ-2018» темиçе ăру çыннисене пĕрлештерчĕ. «Фиалка» ача садне çӳрекен 5 çулти Е. Яковлев чупура чи кĕçĕнни пулчĕ. Чи асли вара – Тутаркасси ял тăрăхĕнчи 78 çулти В. Васильев.

Старта – Пуçлăхпа пĕрле!

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев мăшăрĕпе Лариса Юрьевнăпа Çĕнĕ Шупашкарта тата Шупашкарта массăллă чупусенче хутшăнчĕç. Химиксен хулинчи «Чăрăш ращи» культурăпа кану паркĕнче пухăннисене спорт уявĕпе саламланă май Михаил Васильевич «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» ăмăрту республикăра чи массăллă, анлă сарăлнă спорт ăмăртăвĕсенчен пĕри пулса тăнине палăртрĕ. Шупашкарти аэроклуб çывăхĕнчен 14 пин йĕлтĕрçĕпе пĕрле вара регион ертӳçи хăй те старта тухрĕ. Унччен маларах Михаил Игнатьев спорта юратакансен умĕнче сăмах илнĕ май Чăваш Ен Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн командинче пулса физкультурăпа спорта аталантарассипе çыхăннă патшалăх политикине пурнăçа хастар кĕртсе пынине каларĕ. «Республикăра кашни çулах спортăн çĕнĕ объекчĕсем çĕкленеççĕ. Регионра пурăнакансемшĕн спортпа, физкультурăпа туслă пулни йăлана кĕчĕ», – терĕ вăл. «Кăçалхи спортăн хĕллехи тĕсĕсен кунне Пхĕнчханьри XXIII Олимп вăййисене хутшăнакан Раççей спортсменĕсене хавхалантармалли акци шайĕнче ирттеретпĕр», – терĕ вăл. Ентешĕмĕрсем Татьяна Акимова биатлонистка тата Лана Прусакова фристайлистка Раççей сборнăйĕнче.

Ырă тĕслĕх юнашарах

Çак кун Шупашкар районĕнчи пур ял тăрăхĕнче те йĕлтĕр чупăвĕсем иртрĕç. Кӳкеçри «Олимпийский» стадиона халăх уйрăмах йышлăн пухăнчĕ.

Ăмăртусене официаллă ларутăрура уçнă çĕре ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ – бюджет, финанс тата налук комитечĕн председателĕ Альбина Егорова, ЧР Патшалăх Канашĕн социаллă политика тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитет председателĕ Вячеслав Рафинов, Шупашкар район тата райадминистраци пуçлăхĕсен тивĕçĕсене пурнăçлакан Алевтина Исаевăпа Владимир Димитриев, Кӳкеç ял тăрăх пуçлăхĕ Владимир Вершинин, йĕлтĕрпе чупассипе СССР спорт мастерĕ Роза Алексеева хутшăнчĕç.

Алевтина Исаева йĕлтĕр чупăвне хутшăнакансене спорт уявĕпе саламларĕ, ăнăçлă старт тата финиш сунчĕ. Владимир Димитриев «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ-2018» ăмăрту пурне те пĕтĕçтернине палăртрĕ. Олимп вăййисенче Раççей чысне хӳтĕлекен ентешспортсменсемшĕн «чирлеме» чĕнсе каларĕ.

Альбина Егорова «РФ Президенчĕ Владимир Путин та, ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та спортпа туслă пулнине палăртрĕ. «Паян пĕтĕм Раççей йĕлтĕр йĕрĕ çине тухрĕ. Çапла майпа спорт пурне те пĕрлештернине, Раççей çыннисем пирĕн спортсменсене Олимпиадăра хавхалантарнине кăтартса параççĕ», – терĕ вăл. Вячеслав Рафинов мероприятие хутшăнакансене спорт валли кашни кун вăхăт уйăрма ӳркенмелле маррине палăртрĕ. Йĕлтĕрçĕсене финиша тĕрĕс-тĕкел çитме сунчĕ.

Физкультурăна тата спорта аталантарассине пысăк тӳпе хывнăшăн Роза Алексеева районăн Хисеп хутне тивĕç пулчĕ. Ача-пăча тата çамрăксен «Улăп» спорт шкулĕн преподавательне Валерий Викторова район администраци пуçлăхĕн Тав хучĕпе чысларĕç. Кӳкеç ял тăрăх ертӳçи Владимир Вершинин тата ЧР МЧСĕн Шупашкар районĕнчи профилактика тата надзор ĕçĕ-хĕлĕн пайĕн пуçлăхĕ Денис Портнов «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» физкультурăпа спорт комплексĕн «ылтăн» паллине тивĕçрĕç.

Финиша кам маларах?

Чи малтанах старта çемье командисем тухрĕç. Вĕсем ачан çул ӳсĕмне кура виçĕ ушкăнра вăй виçрĕç. 2004, 2010 çулта тата маларах çуралнă, икĕ ачаллă çемье командисем уйрăммăн ăмăртрĕç. Павловсен, Михайловсен тата Смирновсен çемйисем финиша пĕрремĕш çитсе спортра вăйлине тепĕр хут çирĕплетсе пачĕç.

Унтан йĕлтĕр йĕрĕпе чи пĕчĕккисем, ача садне çӳрекенсем ыткăнчĕç. Вĕсене ашшĕ-амăшĕ, воспитательсем хавхалантарса пычĕç. Дистанцие чи малтан А. Кузьмин тата С. Виноградова вĕçлерĕç, вĕсем хыççăн Д. Семенов тата К. Ананьева çитрĕç, С. Александровпа А. Кошкина финиш йĕрне 3-мĕш пусса каçрĕç.

Малалла VIP-чупу иртрĕ. Райадминистрацин пай тата ял тăрăх ĕçченĕсем, Шупашкар район депутачĕсен пухăвĕн депутачĕсем, организацисен предприяти ертӳçисем 2018 м тăршшĕнче вăй виçрĕç. Янăш ял тăрăх пуçлăхĕ Иван Грачев ăна пĕрремĕш парăнтарчĕ, Шупашкар район депутачĕсен пухăвĕн депутачĕ Николай Хорасев тата райадминистрацин пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсене пайларĕç. Хĕрарăмсен хушшинче нумай функциллĕ центр ĕçченĕ Л. Павлова, райадминистрацин экономика пайĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Софронова, И. Павлова палăрчĕç.

Ытти ушкăнта чупакан арçын ачасемпе хĕр ачасен 3 çухрăма хыçа хăварма тиврĕ. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шулсен хушшинче йĕлтĕрпе чупса Н. Терентьев тата Н. Гордеева пьедесталăн чи çӳллĕ картлашки çине хăпарма тивĕçрĕç. М. Малатов, О. Филиппова «кĕмĕллĕ» пулчĕç, А. Николаев тата К. Мочеева 3-мĕш вырăн йышăнчĕç. Пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулсен хушшинче А. Афанасьев тата П. Семенова дистанцие чи малтан вĕçлерĕç, Н. Никитин тата Д. Трофимова вĕсем хыççăн çитрĕç, А. Иванов тата Н. Горбунова 3-мĕш пулчĕç. Шкулсен хушшинче Атайкассинчи тата Çатракассинчи вĕрентӳ учрежденийĕсем мала тухрĕç.

18-39 çулсенчи хĕрарăмсен хушшинче М. Комиссарова палăрчĕ, Н. Данилова тата З. Волкова дистанцие ун хыççăн вĕçлерĕç. Çак çул ӳсĕмĕнчи арçынсен хушшинче А. Григорьев 1-мĕш вырăна тивĕçрĕ, А. Васильев 2-мĕш пулчĕ, В. Александров – 3-мĕш. 40-59 çултисен хушшинче 1-мĕш вырăна С. Павлов тата Н. Иванова йышăнчĕç. 60 çулти тата аслăраххисен хушшинче А. Егоров тата Р. Алексеева пуринчен маттур пулчĕç.

Пьедестал картлашкисем çине тăма тивĕçнисене грамотăсемпе, медальсемпе тата «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ-2018» символикăллă калпаксемпе, парнесемпе хавхалантарчĕç. Ача садне çӳрекенсем тата çемье командисем валли Патшалăх Канашĕн депутачĕсем ятарлă парнесем те хатĕрленĕччĕ.

АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

Андрей СМИРНОВ,
«Çемье командисем» ушкăнра çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçнĕ, Станъял:

– Кашни çулах йĕлтĕр чупăвне мăшăрпа Иринăпа, ывăлсемпе пĕрле хутшăнатпăр. Асли Федор паян урăх ăмăртура пулнипе старта Макарпа тухрăмăр. Федор Лапсарти Олимп вăййисен чемпионĕ А. Тихонов ячĕпе хисепленекен спорт шкулĕнче биатлонра ăсталăхне туптать. Нумаях пулмать вăл федерацин Атăлçи округĕн Ижевск хулинче иртнĕ ăмăртăвĕсене хутшăнчĕ. Макар та биатлонист пуласшăн.

Иван ГРАЧЕВ,
Янăш ял тăрăх пуçлăхĕ, VIP-чупу çĕнтерӳçи:

– Эпĕ шкул ачи пулнă вăхăтра пур шкулта та спортзалсем пулман, çавăнпа физкультура урокĕсем ытларах тулта, уçă сывлăшра иртнĕ. Çавăнпа пулĕ эпир çакăн пек çирĕп ӳснĕ. Халĕ вара çĕнĕ шкулта спортпа туслашма майсем нумай, шкул команди вăйлă пулнине çакăнпа ăнлантармалла. Манăн икĕ ывăл, иккĕшĕ те йĕлтĕр спортне кăмăллаççĕ.

Людмила ПАВЛОВА,
хĕрарăмсен VIP-ушкăнĕнчи çĕнтерӳçĕ, Шоркка ялĕ:

– Иртнĕ çулта та çак ăмăртусене хутшăнтăмăр, финиша тăваттăмĕш çитрĕмĕр. Кăçал вара çемье командисенчен пĕрремĕш пултăмăр. Ачаранах спорта юратма мана атте, Иван Степанович Кондратьев, хăнăхтарнă. Йĕлтĕр чупăвне çитес çул та хутшăнас кăмăл пысăк.

Сăн ӳкерчĕксене пăхса тĕлĕнĕр: https://vk.com/tavanen.

Саламлатпăр

Арккассинчепурăнакан **Валентина Егоровна ФЕДОРОВĂНА** сумлă юбилей – 85 çул – ячĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр. Çак пурнăçăн вăрăм та анлă çулĕпе малалла утма сывлăх, вăй-хал, канлĕ ватлăх сунатпăр. Ĕмĕр сукмакĕ таса та çутă пултăр. Пире пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Тавах ырă кăмăлушăн.

■ *Ачисем, мăнукĕсем, тăхлачисем.*

02-26

Çак çывăх кунсенче, февралĕн 18-мĕшĕнче, юратнă мăшăр, анне, асанне, кукамай, йăмăк, Кӳкеçре пурăнакан **Юлия Ивановна КОНСТАНТИНОВА** 80 çул тултарать. Эпир пурте ăна юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.

Мĕн сунар сана паян?
Мĕн кирли йăлт пултăр сан:
Ĕмĕр иксĕлми вăй-хал, хастарлăх,
Пултăр ăнăçу ялан.
Çирĕп сывлăх, вашаватлăх,
Çемьере ялан татулăх,
Пурнăçу сан пултăр тулăх.
Пурăн ĕмĕр савăнса,
Пурнăç илемне туйса.
Эс пире ӳстернĕ,
Пурнăçра телей пилленĕ,
Ăс парса ырра вĕрентнĕ,
Çунатсем парса вĕçтернĕ.

■ *Мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, йăмăкĕ тата ытти çывăх тăванĕсем.*

02-19



Матикассинче пурăнакан **Борис Гурьевич СОКОЛОВА** 65 çулхи юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, çемьере юратупа телей, ăнăçу сунатпăр.

■ *Мăшăрĕ Алиса, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, 4 мăнукĕ.*

02-23

Мăн Кивпулăхра пурăнакан **Альбина Капитоновна ПОПОВĂНА** çуралнă кун ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.

Çирĕп сывлăх, тулăх пурнăç, ăнăçу, телей, юрату сунатпăр. Пурнăçра савăнмашкăн сăлтав пултăр, çынсем хисеплеччĕр, килçуртра вара ăшăлăх хуçалантăр.

■ *Юлташĕ.*

02-02



Шорчекассинче пурăнакан **Валерий Николаевич АЛЕКСАНДРОВА** февралĕн 20-мĕшĕнче 65 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Юбилей ячĕпе яланах ыррине, пурнăç урапине тикĕссĕн шутарса пĕр тумхахсăр малалла утмашкăн иксĕлми вăй-халпа çирĕп сывлăх, телейпе юрату сунатпăр.

■ *Аппăшĕпе йăмăкĕсен çемйисем, тăванĕсем.*

01-43

www.meteorf.ru сайт пĕтĕрнĕ тăрăх

ÇАНТАЛĂК

Кĕçнерникун ...Февраль 15	-11°		-20°
Эрнекун ...Февраль, 16	-11 °		-19°
Шăматкун ...Февраль, 17	-8 °		-14°

Февраль	18	Вырсарникун..	-8°
Февраль	19	Тунтикун	-7°
Февраль	20	Ытларикун	-7°
Февраль	21	Юнкун	-10°

валюта курсĕ 15.02.2018
$ 57,59
€ 71,17